чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă 1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă 1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

122/26528/ № | Кĕçнерни кун, 2014, çĕртме (июнь), 26 | Хакĕ ирĕклĕ | WWW.hypar.ru

*Правительствăра*

## Сывлăхран хакли çук

***Министрсен Кабинечĕн ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ертсе пынипе иртнĕ ĕнерхи ларăвĕн кун йĕркинче 2013 çулшăн Чăваш Республикинче пурăнакансен сывлăхĕ çинчен тунă патшалăх докладĕ тĕпре пулчĕ-тĕр. Чăнах, сывлăхран хакли çук. Унпа вице-премьер – ЧР сывлăх сыхлавĕн министрĕ Алла Самойлова паллаштарчĕ.***

Анлă документ, халăх сывлăхĕпе çыхăннă лару-тăрăва тĕплĕ те тĕрлĕ енлĕн тишкернĕ. Тĕп самантсен шутĕнче министр пĕлтĕр республикăра çын вилесси чакнине палăртрĕ – виçĕм çулхипе танлаштарсан 635 çын сахалрах вилнĕ. 2006 çулхи кăтартусемпе шайлаштарса пăхсан лару-тăру пушшех аванрах, вилĕмсен шучĕ 11% пĕчĕкленнĕ. Юн çӳревĕн чирĕсене пула пурнăçран уйрăлассин кăтартăвĕсем уйрăмах лайăхланнă, вĕсем Раççейĕпе те чи лайăххисем-мĕн. Çапах çĕр-шыври кăтартусенчен япăхраххисем те пур: сывлав органĕсен чирĕсене, çулсем çинчи аварисене пула çын вилессипе çыхăннă ĕç-пуç çивĕч.

Тин çуралнă ачасем вилнин кăтартăвĕсем пĕчĕкки савăнтарать. Ку енĕпе эпир Атăлçи округĕнче – 1-мĕш, Раççейре – 2-мĕш вырăнсенче. Пепкесем тенĕрен, Чăваш Енре ача çуратасси ӳссе пырать. Алла Владимировна çакă çемьесенче 3-мĕш тата ун хыççăнхи ачасем ытларах çуралнипе сăлтавланнине палăртрĕ.

Чир-чĕре илес тĕк – сывлав органĕсен чирĕсем анлă сарăлнă. Ку, паллах, нумайăшĕ табак туртнипе те сăлтавланнă. Юн çӳревĕн тытăмĕн чирĕсене пула та нумайăн нушаланаççĕ. Унашкаллисене пĕлтĕр уйрăмах нумай тупса палăртнă – пуçласа чир палăртнисен шучĕ 10 пин çын таранах. Анчах çакă, министр шухăшĕпе, лару-тăру тăруках çивĕчленнинчен мар, çынсене диспансеризациленĕ май шурă халатлисем хайхи чирсене асăрханинчен килнĕ. Чире тупса палăртнă, апла тăк сиплев пуçлама май пур, çакă вара нумайăшне вилĕмрен çăлса хăварма май парасси куç кĕрет.

Медиксен шалăвĕ пирки те сăмах пулчĕ. Пĕлтĕр врачсен ĕç укçине 1,4 хут пысăклатма пултарнă, кĕçĕн медперсоналăнне – 1,7 хут. Çакă медицина учрежденийĕсенчи кадрсен çителĕксĕрлĕхне пĕтерме пулăшмалла. Тепĕр енчен, медицина сферинче патшалăхпа уйрăм бизнес алла-аллăн ĕçлесси вăй илсе пырать. Уйрăмах – стоматологире. Çавăн пекех гемодиализа та уйрăм çынсем хăйсем çине илнĕ, васкавлă пулăшура та çак ĕçтешлĕх пулăшать. Пĕтĕмпе медицина сферинчи 40 организаци аутсорсинг мелĕпе усă курать, çапла ĕçлени медперсонал йышне кĕнĕ çынсен шутне 20% чакарма май панă.

Калаçăва пĕтĕмлетнĕ май Михаил Игнатьев оптимизаци кирлине çирĕплетнипе пĕрлех çак саманта та палăртса хăварчĕ: тен, перекетлĕхе тĕпе хурса хăш-пĕр çĕрте чакарни вырăнлă та пуль, çапах татăклă йышăну тунă чух чи малтан вăл е ку тăрăхра пурăнакансен шухăшне шута илмелле.

Чылай калаçтарнă тепĕр ыйту – Етĕрне хулине 2020 çулччен модернизацилемелли комплекслă инвестици планĕ. Унпа экономика аталанăвĕн министрĕ Владимир Аврелькин паллаштарчĕ. Етĕрне – республикăри федерацин монохуласене пулăшмалли программине кĕнĕ ултă хуларан пĕри. Плана пурнăçлани асăннă хулари производство монопрофильлĕхне ансăрлатма тивĕç. Çĕнĕ производствăсем, çĕнĕ 1,7 пин ĕç вырăнĕ пулмалла. Çав вăхăтрах çак план тытăмне хулана шывпа, ăшăпа тивĕçтерекен объектсем, тавра çул, тасатакан сооруженисем тăвасси те кĕреççĕ. Михаил Игнатьев тăкаклă çак проектсемсĕр пуçне тупăш кӳрекеннисем ытларах кирли çинчен каларĕ. Çийĕнчен туса пĕтермен объектсемпе çыхăннă ыйтусене татса памалла, хулан инвестици илĕртӳлĕхĕ çакăнтан та килет вĕт. Ларăва Етĕрне влаçĕсем те хутшăнчĕç те – хайхи «туса пĕтерменнисенчен» пĕрин шăпи пирки калаçу пулчĕ. Сăмах машзаводăн пурăнмалли çурчĕ пирки. Экспертиза ирттернĕ-мĕн – тивĕçтермен, çавна май объекта пăсма тивет-тĕр.

Çивĕч тепĕр ыйту – хула тавра çул тăвасси. Хальлĕхе федераци çулĕпе иртекен транспорт хула варрипе тухать. Тавра çул ыйтăва татса пама тивĕç. Анчах, ЧР Пуçлăхĕ палăртнă тăрăх, çав çулăн çурри кăна тунă, тепĕр çурри валли федераци укça уйăрассипе çыхăннă шанăç пысăк мар. Чăн та, ларура Етĕрнесем сĕнӳ пачĕç: «Унта пысăк хăвăртлăхлă чукун çул магистралĕ иртмелле, станци пулмалла. Тен, тавра çул тăвассине çав проектпа çыхăнтармалла – ун шучĕпе тумалла?» Михаил Васильевич палăртнă тăрăх – ВСМ строительствине 18-мĕш çулччен, Раççей тĕнчери футбол чемпионатне йышăннă тĕле, тума пуçлаççĕ, анчах вĕçлеймĕç. Паллах, Етĕрне çумĕнчи тавра çула çав проектпа пĕтĕçтерме сĕнмешкĕн май пур. Анчах вăл та «телей» çапла çăмăллăнах йăтăнса анассăн калаçмарĕ. Эппин, хамăрăн майсене ытларах шанмалла.

Ларура республика территорийĕнче пурăнмалли çуртйĕре хутса ăшăтас тĕлĕшпе коммуналлă пулăшу ĕçĕсемпе усă курмалли норматива çирĕплетрĕç. Вице-премьер – строительство министрĕ Олег Марков пĕлтернĕ тăрăх – халĕччен çынсем усă курнă ăшăшăн вăтам виçепе çулталăк тăршшĕпех – 12 уйăх – тӳлесе пынă. Малашне апла пулмасть: 7 уйăх, ăшăпа усă курнă тапхăрта, туллин тӳлесе пырăпăр. Асăннă норматив вара, тĕлĕнмелле те, пĕчĕкленет иккен. Чăн та, пурин те мар. 1999 çул хыççăн тунă, виçĕ хутран çӳллĕрех пурăнмалли çуртсенчи ăшă хакĕн нормативĕ чакать, аслăрах тата çӳллĕшĕпе пĕчĕкрех çуртсенче – пысăкланать. Ку çĕнĕрех çуртсенче ăшă перекетлĕхĕн кăтартăвĕсем лайăхраххипе сăлтавланни куç кĕрет.

Министрсен Кабинечĕн маларах тунă хăш-пĕр йышăнăвне улшăнусем кĕртнĕ хыççăн пухăннисем Республика кунне халалланă мероприятисем мĕнле иртнине пĕтĕмлетрĕç. Культура министрĕн Вадим Ефимовăн каласа памалли уйрăмах нумай: «Раççей çăл куçĕсем», Акатуй, «Руç ăстисем» тата ыттисем – мероприятисен шучĕ çук вĕт! Вĕсене ентешсем кăна мар, Раççейĕн вун-вун субъектĕнчен, ют çĕр-шывсенчен килнĕ йышлă хăна хутшăннă. Пĕтĕмлетнĕ май министр «уяв ăннине» палăртрĕ. Михаил Игнатьев хирĕçлемерĕ.

● ➡ 2 стр.

## Раççей культурине вăй паракан çăл куççем



***Республика кунĕнче Хĕрлĕ тӳрем самантлăха та лăпланмарĕ. Кама кăна йышăнмарĕ пуль вăл: Пĕтĕм чăвашсен иккĕмĕш Акатуйне килсе çитнĕ хăнасене, чăваш эстрада юрăçисене, Раççейĕн тĕрлĕ регионĕнчи ал ĕç, юрă-ташă ăстисене, хула çыннисемпе уява килнĕ ентешсене… Çакăнтах Чăваш Ен районĕсемпе хулисен этнокультура кил-çурчĕсемпе паллашма май килчĕ. Кашниех вăй çитнĕ таран тăрăшнă, вăл е ку хутлăхăн хăй евĕрлĕхне уçса пама мехел çитернĕ.***

Каçхине çичĕ сехетре унта Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев тата сумлă хăнасем килсе çитрĕç: Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин депутачĕсем Алена Аршинова, Валентин Шурчанов, Руслан Тихонов, Раççей Геройĕ Николай Гаврилов генерал-лейтенант, Раççей Геройĕ, РФ Президент Администрацийĕн Шалти политика управленийĕн Регион политикин департаменчĕн пуçлăхĕ Алексей Романов, Раççей халăх артисчĕ Леонид Якубович, çавăн пекех ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ Юрий Попов, Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов, ЧР культура министрĕ Вадим Ефимов...

Паллă та хисеплĕ çак çынсем республикăра çирĕм иккĕмĕш хут иртекен халăх пултарулăхĕн "Раççей çăл куçĕсем" фестивальне савăнăçлă лару-тăрура хупма хутшăнчĕç. Михаил Игнатьев Чăваш Ен çыннисене, хăнасене Республика кунĕпе саламларĕ: "Чăваш Ен эсир пуррипе пуян. Авалхи культурăна, йăла-йĕркене ваттисем хушнă пек ламран лама, çамрăк ăрăва парса пырса çĕр-шыва, тăван республикăна çӳллĕ шая çĕкленме пулăшатăр, – терĕ. – "Раççей çăл куçĕсем" йышши фестивальсем халăхсен хушшинчи туслăха çирĕплетме, Раççей халăхĕсен наци культурин пуянлăхне упраса хăварма май параççĕ. Раççей Федерацийĕн Президенчĕ Владимир Путин 2014 çула Культура çулталăкĕ тесе палăртрĕ. Чăваш халăхĕн культури нумай енлĕ, тĕлĕнмелле пуян. Çак уявсем пире иртнине аса илме, хальхине хаклама тата малашлăха шанчăкпа пăхма пулăшаççĕ".

Паллă çак кун патшалăх наградисене илекенсем те пулчĕç. Раççей Федерацийĕн Президенчĕн Указĕпе СССР халăх артисткине, К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕн артисткине Вера Кузьминана Хисеп орденĕпе наградăланă. Чăваш халăхĕ юратакан актриса çак чыса ĕçри çитĕнӳсемшĕн, обществăри хастарлăхшăн тивĕçнĕ. Сумлă наградăна Вера Кузьминична ЧР Пуçлăхĕн аллинчен пĕтĕм халăх умĕнче илчĕ. Уява пынисем ăна тăвăллăн алă çупса саламларĕç. Вулаканăма Вера Кузьминапа паллаштарма кирлех те мар, эпир вăл калăпланă сăнарсене чуна илсе çитĕннĕ. Халăх юратакан Чăваш театрĕнче вăл 66 çул. Хисеплĕ Вера Кузьминична, тата нумай-нумай çул ĕçлеме, вун-вун çĕнĕ сăнар калăплама ырлăх-сывлăх сунатпăр сире.

Тав сăмахĕнче пултаруллă çыннăмăр çак шухăша палăртрĕ: "Тавтапуçах, хисеплĕ чăваш халăхĕ, хисеплĕ хăнасем. Чăваш çĕрĕ чечеклентĕр, чăваш чĕлхи яланах пултăр. Малалла-ха пурнăç, малалла!"

Чăваш Республикин Указĕпе тăван республика умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн, общество тата ыр кăмăллăх енĕпе хастарлăх кăтартнăшăн "Чăваш Республикин Хисеплĕ гражданинĕ" ята Раççей Геройне, Канаш районĕнчи Янкăлчра çуралса ӳснĕ Николай Гаврилова панă. Ун паттăрла ĕçĕсем пирки те илтмен мар: Раççей çарĕн тава тивĕçлĕ летчикĕ Афганистанра пин-пин хут сывлăша çĕкленнĕ, патшалăхăн ятарлă хушăвĕсене пурнăçланă. Паттăрлăхшăн ентешĕмĕр Ленин, Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕсене, III степень "Тăван çĕр-шыв умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн" ордена тивĕçнĕ.

Республика ертӳçи декорацийпе хушма искусствăн Пĕтĕм Раççейри "Руç ăстисем" вун иккĕмĕш конкурсĕн гран-прине Иваново облаçĕнче ĕçлесе пурăнакан Любовь Степановăна пачĕ. Вăл хăйĕн "Телей кайăкĕ" ĕçне, халăхсен хушшинчи туслăха палăртаканскере, чăваш тата вырăс тĕррин ерешĕсемпе усă курса хатĕрленĕ.

Република кунĕпе пухăннисене çавăн пекех РФ Патшалăх Думин депутачĕсем Алена Аршинова, Валентин Шурчанов, Руслан Тихонов, Раççей халăх артисчĕ Леонид Якубович саламларĕç.

Ун хыççăн Хĕрлĕ тӳремре юрă-кĕвĕ хуçаланма пуçларĕ. Хула çыннисемпе хăнасем Китайран, Италирен килнĕ артистсен, Раççейри вун-вун регионти халăх пултарулăх ăстисен тата çавăн пекех хамăрăн профессионал тата фольклор коллективĕсен юрри-ташшипе киленчĕç. Уява çавăн пекех фейерверксен Пĕтĕм тĕнчери çиччĕмĕш гала-концерчĕ илем кӳчĕ.



**Надежда СМИРНОВА.**

Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ӳкерчĕкĕсем





КУН хыççăн КУН ☎ 56-04-26

### Акатуй – вăйлисен уявĕ

***Ĕлĕкреннех Акатуй ăмăртусемпе пуян пулнă. Паянхи кун та çак йăла манăçа тухман. Республика кунĕнче иртнĕ Пĕтĕм чăвашăн уявĕнче те вăйлисемпе хăюллисем тĕрлĕ турнирта вăй виçнĕ.***

Спортпа туслисем кире пуканĕ йăтас енĕпе, кĕрешӳ тата армреслинг ăмăртăвĕсенче уйрăмах хастар пулнă. Тимĕр вăййине кăмăллакансен хушшинче Шупашкарти Владислав Котков, Вăрнар тăрăхĕнчи Алик Волков, Елчĕк районĕнчи Дмитрий Енедеров, Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕн студенчĕ Александр Павлов палăрнă. Ветерансен ушкăнĕнче Шăмăршăри Константин Кусаиновпа Владимир Шуряков тата Шупашкарти Юрий Карпов малти вырăнсене йышăннă. Хĕрсем те хăйсен вăйне тĕрĕсленĕ: кире пуканĕ йăтакансен турнирĕнче пурне те парăнтарса Куславкка районĕнчи Тĕрлемес пики Анастасия Александрова çĕнтернĕ. Акатуй уявĕн тĕп парнине – такана – çĕнсе илессишĕн кавир çине темиçе регион кĕрешӳçисем тухнă. Абсолютлă чемпион ятне вара тутар паттăрĕ Риназ Санаров тивĕçнĕ.

**А.МИХАЙЛОВ.**

### Спорта аталантармашкăн

***РФ Правительствин Председателĕ Д.Медведев «Физкультурăпа спорта аталантарасси» патшалăх программине 2014-2016 çулсенче пурнăçламалли плана çирĕплетнĕ.***

Федерацин «2006-2015 çулсенче Раççей Федерацийĕнче физкультурăпа спорта аталантарасси» тĕллевлĕ программипе килĕшӳллĕн пирĕн çĕр-шывра массăллă спорта аталантармашкăн 193 объект, спортсменсене ăсталăха туптамашкăн 9 центр, искусствăлла майпа тунă 89 футбол уйĕ тата 3 манеж хута каймалла. Çавăн пекех тĕрлĕ регионта физкультурăпа спорт комплексĕсем (70 объект) тума йышăннă. Программăра массăллă 17 ăмăрту йĕркелесси çинчен те каланă, вĕсен йышĕнче – йăлана кĕнĕ «Йĕлтĕр йĕрĕ», «Наци кросĕ» чупусем тата «Кавказ вăййисем». «Пысăк çитĕнӳсен спортне аталантарасси тата спорт резервне хатĕрлесси» çум программипе килĕшӳллĕн Раççейре тĕнче (9) тата Европа (4) чемпионачĕсем иртмелле, унтах спорт хатĕрлевĕн 69 стандартне çирĕплетнĕ. 2017-2018 çулсенче пирĕн çĕр-шывра футбол енĕпе тĕнче чемпионачĕ тата конфедерацисен кубокĕ ирттерме йышăннăран 4 стадион тата тренировка валли 12 лапам тума палăртнă.

**А.ПЕТРОВ.**

### «Пĕрле ташлар»

***Çак ятпа Шупашкарта хореографи ăстисен конкурсĕ иртнĕ. Ăна хула администрацийĕн культура управленийĕ тата 4-мĕш ӳнер шкулĕ пуçарнă.***

Конкурсра хулари ача-пăча коллективĕсем тĕрлĕ номинацире хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарнă. Ташă уявĕнче Ача-пăча пултарулăх çурчĕн çамрăк артисчĕсем уйрăмах палăрнă. «Нон-стоп» ушкăна çӳрекен пĕчĕк хĕрсем (ертӳçи – С.Дворникова) «Эстрада ташшисем» номинацире çĕнтернĕ. Вĕсенчен аслăрах пикесен ансамблĕ жюри членĕсене халăх ташшипе савăнтарса иккĕмĕш вырăн йышăннă. Е.Арбенина ертсе пыракан тепĕр ушкăн та II степень Диплома тивĕçнĕ. Пултарулăх коллективĕн «Хĕвел тухăç юмахĕсем» ташшине куракансем те килĕштернĕ: Интернет сасăлав пĕтĕмлетĕвĕпе вĕсене ятарлă парнепе чысланă. Конкурс йĕркелӳçисен (4-мĕш ӳнер шкулĕн) ташăçисем те тĕрлĕ номинацире палăрса дипломлă пулнă.

**Е.АНДРЕЕВ.**

### Улатăрта – ирçесен фестивалĕ

***Улатăр районĕнчи Атрать ялĕ ирçе халăх пултарулăхĕн коллективĕсене регионсен хушшинчи «Арта» фестивальне пухнă.***

ЧР Культура министерствипе Чăваш Енри мордва культура центрĕ йĕркеленĕ уява Ульяновск облаçĕнчи, Мордва тата Чăваш республикисенчи ушкăнсем хутшăннă. Вĕсем куракансене ал ĕç ăстисен ĕçĕсемпе паллаштарнă, наци апат-çимĕçĕпе хăналанă. Хастаррисемпе хăюллисем тĕрлĕ ăмăртура – кире пуканĕ йăтасси, армспорт, вĕрен туртасси, мини-футбол, волейбол – вăй виçнĕ. Уява юрă-ташă та илем кӳнĕ. Халăха Патăрьел районĕнчи «Умарина», Йĕпреç тăрăхĕнчи Ирçе Çармăсри «Гарнипов» ансамбльсем, Пăрачкаври «Харим» ташă ушкăнĕ тата ытти регионтан килнĕ коллективсем савăнтарнă. Улатăрти ирçесем те хăйсен пултарулăхне кăтартнă: «Околица», «Живые родники» ушкăн, «Ойме» çемье ансамблĕ, «Лейне» пухăннисене çепĕç юрăсемпе тыткăнланă.

**А.АНДРИЯНОВ.**

### Консультаци пунктĕнче – тӳлевсĕр

Çĕртме уйăхĕн 27-мĕшĕ – Раççейре тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ илмелли кун. Ăна «Раççейри юристсен ассоциацийĕ» общество организацийĕ ирттерет.

Чăваш Республикинче çак кун тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ парассине Раççей Федерацийĕн Президенчĕн Чăваш Енри йышăну пӳлĕмĕпе «Раççейри юристсен ассоциацийĕ» общество организацийĕн республикăри уйрăмĕ, РФ Юстици министерствин ЧР управленийĕ, федерацин суд приставĕсен службин Чăваш Енри управленийĕ, Чăваш Республикин Юстици министертви, Нотариат палати, Адвокат палати пĕрле йĕркелеççĕ.

Юристсем тӳлевсĕр юридици консультацийĕсене илекенсене 2014 çулхи çĕртме уйăхĕн 27-мĕшĕнче Раççей Федерацийĕн Президенчĕн Йышăну пӳлĕмĕн консультаци пунктĕнче 12 сехетрен пуçласа 15 сехетчен йышăнаççĕ. Адресĕ: Шупашкар хули, Ленинград урамĕ, 36-мĕш çурт.

Йышăнăва /8352/ 62-22-33 телефонпа шăнкăравласа малтанах çырăнмалла.

**Çанталăк çинчен**

Паян пĕлĕтлĕ çанталăк пулать, кăштах çумăр çăвать. Çил çурçĕр-хĕвел анăçĕнчен çеккунтра 6 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 18, çĕрле 7 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 749 мм, сывлăшри нӳрĕк 48 процент.

**Кун тăршшĕ 17 сехет те 38 минут.**

*Тăлăхсене – хваттер*

# "Телейлĕ пулăр, тулăх пурăнăр..."

***Уяв парнийĕ кÿресси – халăхăмăрăн ырă йăли. Кăçалхи Республика кунĕ тĕп хуламăрти 17 çамрăкăн – тăлăхсемпе ашшĕ-амăшĕн хÿттисĕр юлнисен – пурнăçне ырă та çутă, ĕмĕр асра юлакан самант пулса кĕрсе юлчĕ: Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев тата Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов вĕсене хваттер уççи пачĕç.***



cap.ru сайчĕн сăн ÿкерчĕкĕ

Тĕп хуламăрти "Сад" микрорайонта вырнаçнă Дементьев урамĕнчи 7 тата 9-мĕш çуртсен умĕнче иртнĕ савăнăçлă мероприятие РФ Патшалăх Думин Вĕрентÿ енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕн çумĕ Алена Аршинова, Раççей Геройĕсем Николай Гаврилов, Алексей Романов тата ыттисем хутшăнчĕç.

"Патшалăх влаçĕн органĕсем çĕршыври демографи лару-тăрăвне лайăхлатассине, çемьесенче кĕтнĕ те юратнă пепкесем йышланччăр тесе тăнăçлă хутлăх йĕркелессине тĕпе хураççĕ. Хулара та, ялта та пурнăç шайĕ лайăхланса пырать, çынсем малашлăх ырă пуласса шанаççĕ, – терĕ Михаил Васильевич уява уçнă май. – Ачасен пирĕнтен лайăхрах пурăнмалла. Раççей Федерацийĕн Президенчĕ Владимир Путин кашни çемье, ача кун-çулне телейлĕ тумашкăн влаç органĕсенчен çирĕп ыйтать, уçăмлă тĕллев палăртать.

Паян эпир тăлăхсене тата ашшĕ-амăшĕн хÿттисĕр юлнисене хваттер уççи паратпăр. Палăртма кăмăллă: çемьере 16, 15, 12 ача çитĕнтерекен те пур пирĕн хутлăхра. Унашкаллисемпе чăннипех мухтанатпăр. Ачасен çемье ăшшинче çитĕнмелле. Сирĕн хваттерĕр вĕсен савăнăçлă сассипе туласса, унта юратупа килĕшÿ хуçаланасса шанатăп. Телейлĕ пулăр, тулăх пурăнăр".

Унтан Чăваш Ен Пуçлăхĕ хĕрсемпе яшсене хваттер уççи пачĕ тата асăнмалăх парнепе савăнтарчĕ: Виталий Дмитриева, Татьяна Яковлевăна, Наталья Яковлевăна, Илья Якушева... – çĕнĕ микрорайонти хăтлă çуртсенчи çутă та илемлĕ хваттерсенче малашне вун çиччĕн тăван кил ăшшине упрамашкăн, çирĕп çемье çавăрса тĕпренчĕкĕсене телейлĕ тумашкăн ăнтăлĕç. Вĕсем хăйсем те телейлĕ. Йывăр вăхăтра çывăх тăванĕсем пек пулса тăрăшнăшăн, ашшĕ-амăшĕ евĕр хÿтĕлесе пурнăç çулĕ çине кăларнăшăн тата шурă çурт лартса панăшăн /тăван кĕтеслĕ тунăшăн эппин/ патшалăхăмăра, республика, хула ертÿлĕхĕсене чĕререн тав турĕç.

Михаил Игнатьев палăртнă тăрăх – иртнĕ çул парса çитерейменнипе пĕрле кăçал 500 тăлăха çакнашкал хваттерлĕ тумалла. Ыттисен те шанăçа çухатмалла мар: патшалăхăн çурт-йĕрпе тивĕçтермелли ытти программи – сăмахран, "Çамрăк çемье", "Ялăн социаллă аталанăвĕ" – ăнăçлă ĕçлет. Чăваш Ен Пуçлăхĕ тăлăхсен кун-çулне çăмăллатмашкăн хутшăннă, хăйсен чун ăшшине вĕсемпе пайланă хастарсене тав турĕ.

Çĕнĕ хваттерлĕ пулнă çамрăксене Алена Аршинова ăшшăн саламларĕ. "Эсир паян икĕ уяв паллă тăватăр: ентешĕрсемпе пĕрле Чăваш хутлăхĕн кунне чыслатăр тата çĕнĕ çурта куçатăр. Халĕ хăвăрăн кĕтес пур. Телей кайăкне ан вĕçертĕр, ăнăçлăха, тăнăçлăха хăвăрăн тумалла, малалла талпăнмалла, аслисен шанăçне тÿрре кăлармалла", – ырă сунчĕ вĕсене.

Хĕрлĕ хăйăва Михаил Игнатьев, Алена Аршинова, Леонид Черкесов касрĕç. Хăнасем хваттерсенчи условисемпе паллашрĕç, вĕсем хăтлă пулнине палăртрĕç.

...Çак куна Виталий чылайранпа кĕтнĕ. Тăлăха юлнăскершĕн тăван кил малтан Çĕмĕрлери "Елочка" ача çурчĕ шутланнă. Сакăр класс пĕтерсен ăна Шупашкар районĕнчи ырă çынсем хăйсен хÿттине илнĕ. Шкултан ăнăçлă вĕренсе тухсан Чăваш ял хуçалăх академийĕн студенчĕ пулса тăнă. Тăватă курс пĕтернĕ хыççăн хăй ирĕкĕпе хĕсмете кайнă. Салтак тивĕçне пурнăçласа тин кăна тавăрăннăскере авă ырă хыпарпа савăнтарчĕç.

Сăмах май, Валентина Михайловнăпа Иван Владимирович унсăр пуçне тата виçĕ хĕре опека мелĕпе пурнăç çулĕ çине тухма пулăшнă. Светланăпа Екатерина аслă пĕлÿ илнĕ, Татьянăпа Виталий кĕçех вĕренсе пĕтереççĕ. Ывăл-хĕрĕ /урăхла шухăшлама май та çук, мĕншĕн тесен çак хушăра вĕсем пĕр çемье пулса тăнă, чунпа çывăхланнă/ художник, ветеринари тухтăрĕн /иккĕн тан/, медицина ĕçченĕн профессийĕсене суйласа илнĕшĕн аслисем чăннипех хĕпĕртеççĕ. Паян та авă вĕсем Виталипе пĕрле хваттер уççине тивĕçнĕ ятпа савăнăçа пĕрле пайламашкăн килнĕ...

Кайăк чĕпписем те ÿссе çитĕнсен тăван йăваран вĕçсе тухаççĕ, хăйсенне çавăраççĕ. Ачасем те çавăн пекех ĕнтĕ. Куншăн Валентина Михайловнăпа Иван Владимирович хĕпĕртеççĕ кăна – апла тăк вĕсем пурнăçра хăйсен вырăнне тупнă. Çамрăксем тăван кил ăшши парнеленĕ çынсене нихăçан та манмаççĕ, ерçÿллĕ вăхăт тупăнсанах вĕсем патне тăван яла васкаççĕ. Валентина Михайловна калашле, ывăл-хĕрĕ опекăра пулнине чунпа нихăçан та йышăнман, хăйсен çуначĕ айĕнче ăшăтса ÿстернĕ çынсене ашшĕ-амăшĕ тесех сумланă.

■ **Валентина СМИРНОВА**

# Сывлăхран хакли çук

**/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.**

Республика кунĕн экономикăпа çыхăннă кăтартăвĕсем те курăмлă. Экономика форумĕ сумлă хăнасене пухнă, регионсен ĕçтешлĕхĕн куравне те ютран нумай компани килнĕ. Фейерверксен фестивальне ку хутĕнче Крым тĕп хулин Симферополĕн «салют ăстисем» те хутшăннă. Сăмах май, шăпах вĕсен фейерверкĕсем куракана ытларах килĕшнĕ. Гран-прие вара Беларуç фирми çĕнсе илнĕ. Куракансем тенĕрен, вĕсен кăмăлне мĕнле хакланă-ха? Владимир Аврелькин министр пĕлтернĕ тăрăх – пин-пин çын пухăннă заливра сасă хăватне виçекен приборсемпе усă курнă иккен. Çынсем салют хыççăн кăшкăраççĕ, алă çупаççĕ – çавна висчнĕ.

Михаил Игнатьев та уявсем мĕнле иртнипе кăмăллă. Комсомольскинче праçнике мĕнле хатĕрленине пысăка хурса хакларĕ: çулсене юсанă, пĕтĕмпех тирпейленĕ. Уява çын нумай пынăшăн пушшех савăннă: «Вĕсене унта никам та хăваласа пыман вĕт – иртме çук! Хисеплĕ ватăсем, ачасем, ача амăшĕ пулма хатĕрленекен хĕрарăмсем... Ача çуратасси модăна кĕчĕ – питĕ лайăх!» Михаил Васильевич сăмахне уява хатĕрленĕ илемпе тирпейлĕхе малашне те упрамалли пирки каланипе вĕçлерĕ.

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

# Пурте пĕрле тăрăшсан

***Федерацин Чăваш Республикинчи тĕп инспекторĕ Геннадий Федоров хальхинче республикăра пăшалтан тĕл перес спорта аталантарас, ăна пур енлĕн пулăшу кÿрес тĕллевпе республикăри ĕç тăвакан влаç тытăмĕсен тата федерацин территори влаç органĕсен ертÿçисемпе канашлу ирттернĕ. Мĕншĕн тесен çитĕнекен ăрăва çарпа патриот воспитани панă чухне çакă питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине кашниех аван ăнланать.***

– Асăннă ыйтăва мĕнле пурнăçланине Раççей Федерацийĕн федерацин Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕ Михаил Бабич сăнаса тăрать, – тенĕ вăл. – Чылай тĕл пулу ку спортри кăлтăксемпе çитменлĕхсене çиеле кăларчĕ. Вĕсене пирĕн вăраха ямасăр пĕтерме тăрăшмалла, çак ĕçе пур тытăмăн та хастар хутшăнмалла...

Чăваш Енре паян 193 тир ĕçлет. Пăшалтан тĕл перес спорт уйрăмах Шупашкар хулинче /46 тир/, Канаш /20/, Вăрмар тата Шупашкар /13-шер/ районĕсенче аван аталанать. 262 вăтам шкулта пурнăç хăрушсăрлăхĕн никĕсĕсен предмечĕн пахалăхлă кабинечĕсене уçнă. 302 вĕренÿ учрежденийĕнчи 177 тирта тĕл перес ăсталăха ÿстереççĕ.

– Кăшт маларахри тапхăрта ку спорт пирĕн тăрăхра та вăйлă аталаннăччĕ, пăтрануллă вăхăтра унăн сумĕ чакрĕ. Тренировкăсем ирттермелли ятарлă лапамсем çукпа пĕрех. Юрать-ха, 5-мĕш гимназипе ДОСААФ тирĕсем хупăнмарĕç, – шухăшне палăртрĕ Чăваш Енĕн спорт министрĕ Сергей Мельников. – Çав сума ÿстерме пурте пĕрле тăрăшăпăр...

■ **А.СТЕПНОВ**

*Ас тăвăм*

# Паттăрсен ячĕпе – монумент

***Республика кунĕнче Трак енре те сумлă делегаци пулчĕ. Ун йышĕнче – Раççей Геройĕ Николай Гаврилов генерал-лейтенант, Раççей телекуравĕн «Поле чудес» программин ертÿçи, Раççей халăх артисчĕ Леонид Якубович, РФ Президенчĕн Администрацийĕн Шалти политика управленийĕн Регион политикин департаменчĕн пуçлăхĕ, Раççей Геройĕ Алексей Романов, ирĕклĕ мелпе кĕрешес енĕпе тăватă хут тĕнче чемпионĕ Сергей Корнилаев тата ыттисем.***



А.ЯКОВЛЕВ сăн ÿкерчĕкĕ

Вĕсене Чатукасси çĕрĕ çинче çăкăр-тăварпа, чăвашсен кăпăклă сăрипе кĕтсе илчĕç. Хăнасем Филипп Лукин композиторăн халăх музейĕпе паллашрĕç. Культура çуртĕнче вертолетчиксем тата Совет Союзĕн пĕрремĕш Геройĕ Анатолий Ляпидевский çинчен видеофильмсем пăхрĕç.

Анатолий Васильевич мăшăрĕпе Чатукассинче 1973 çулта пулнă. Çав ятпа кунти шкул çурчĕ çине асăну хăми вырнаçтарнă. 1960 çулта ку ял çыннисемпе чăвашсен паллă летчикĕ Федот Орлов та курнăçнă.

Район ертÿлĕхĕпе хисеплĕ хăнасем Чатукассинче Поляр унки леш енче ĕçленĕ летчик-авиаторсене сума суса монумент уçрĕç. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Андрей Шестаков Раççей историйĕ çав тери пуяннине, ăна пулас ăрусем валли упраса хăвармаллине, Трак ен çыннисем монумент вырнаçтарма пулăшнăшăн Раççей Геройне Николай Гаврилов генерал-лейтенанта тав тунине палăртрĕ, ăна район администрацийĕн Тав хутне пачĕ.

– Летчик профессийĕ çав тери сумлă. Пирĕн ентеш-вĕçевçĕсенчен те çĕр-шыв Геройĕн ятне тивĕçлисем сахалăн мар. Мухтанатпăр вĕсемпе, – терĕ Раççей Геройĕ Николай Гаврилов генерал-лейтенант. Раççей халăх артисчĕ Леонид Якубович телеертÿçĕ Трак ен çыннисене историне манманшăн, ăна пулас ăрусем валли упраса хăварма çине тăнăшăн ăшшăн тав турĕ.

Шупашкарти «Трак ен» ентешлĕх ертÿçи Алексей Львов Николай Гавриловпа Леонид Якубовича ентешлĕх медальне пачĕ. «Заволжский» клуб çумĕнчи Андрей Тюмеров ертсе пыракан пултарулăх ушкăнĕ пухăннисене çĕкленÿллĕ юрăсем парнелерĕ.

■ **Виктор ДАНИЛОВ.**
Красноармейски районĕ

*Ăмăрту*

# Трактор мар, çын сухалать



***Йĕпреç тăрăхĕнче механизаторсен професси ăсталăхне ÿстерессине, çĕр ĕçĕнчи паха опыта сарассине пысăк вырăн уйăраççĕ. Çакна районти сухаçăсен ăмăртăвне кашни çулах ирттерни те лайăх çирĕплетет. Йăлана кĕнĕ тупăшăва хутшăнма кăмăл тунисене çак кунсенче «Красный партизан» колхоз йышăнчĕ.***

Сухаçăсен ăмăртăвĕ кăçал 31-мĕш хут иртрĕ. Ăна Республика кунне тата район историйĕнче паллă йĕр хăварнă, Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче паттăрлăх кăтартнăшăн III тата II степень Мухтав тата Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕсене тивĕçнĕ Иван Петров механизатора халалларĕç. Вăл çуралнă тăрăха çĕнтерÿпе таврăннă та тивĕçлĕ канăва тухичченех «Ибресинский» тата «Знамя» хуçалăхсенче «хурçă утпа» ĕçленĕ. Сухаçăсен ăмăртăвĕнче темиçе те çĕнтернĕ. Шел, вунă çул каялла пирĕнтен яланлăхах уйрăлса кайрĕ.

– Иван Степановичăн ырă сăнарĕ пире çĕнĕ çитĕнÿ тума хавхалантарать, – терĕ ăмăртăва уçса район администрацийĕн пуçлăхĕ Николай Чугаров. – Чи лайăх кăтартупа савăнтаракан механизатора ун ячĕллĕ приз парса хавхалантарăпăр. Çак чыса тивĕçекенсен йышĕ çуллен ÿсни кама ан савăнтартăр? Çĕртен тупăш ытларах илессишĕн канăçа çухатса ĕçлекенсем – кашни хуçалăхрах. Паянхи тупăшу çĕнĕ ятсемпе пуянланĕ.

Пучинке сали çывăхĕнчи хура пусă уйĕнче ирттернĕ ăмăрту Николай Петрович сăмахĕ тÿрре тухнине кăтартрĕ. Комисси механизаторсен ĕç пахалăхĕн 10 енне тĕпе хурса хакларĕ. Тăватă сехете яхăн тăсăлнă кĕрешÿ кăтартăвĕсене пĕтĕмлетнĕ хыççăн Пысăк Упакассинчи Корнилов фермер хуçалăхĕн чысне хÿтĕленĕ, халĕччен кунашкал конкурса хутшăнман Василий Корнилов хăйне шанса панă МТЗ-82 тракторĕпе тÿрĕ те тарăн касă çырнине палăртрĕ. Комисси чăркăшланса пăхрĕ пулин те унăн ĕçĕнче пĕр кăлтăк та тупаймарĕ. Призпа чысланă чух ашшĕ, фермер хуçалăхĕн ертÿçи Олег Корнилов, чи малтан саламларĕ.

Кустăрмаллă тракторпа тупăшнă сухаçăсенчен II степень Диплом çĕнсе илнĕ «Трудовик» агрофирма механизаторĕ Яков Ерилеев Корниловран темиçе балл кăна сахалрах пухрĕ. Вĕсем иккĕшĕ те Пысăк Упакассинче пурăнаççĕ. «Эпĕ ÿлĕмрен санпа ăмăртса ĕçлеме килĕшÿ тăвас тĕллевлĕ», – савăк кăмăлпа палăртрĕ Яков Ерилеев, хăйĕн ентешне пысăк çитĕнÿпе саламланă май.

Туçа каччи, «Красный фронтовик» колхоз уйĕнче трактор çÿретекен Петр Дмитриев Пучинкерен III степень Диплом илсе кайрĕ. Гусеницăллă тракторпа чи маттурри «Искра» колхозран килнĕ Александр Тихонов пулчĕ. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсенче – Владимир Арсентьев /«Трудовик» агрофирма/ тата Петр Егоров /Калинин ячĕллĕ ЯХПК/.

«Чи çамрăк механизатор» номинацире «Путиловка» агрофирма механизаторĕ, 22 çулти Юрий Захаров палăрчĕ. Упакасси тăрăхĕнче Захаровсем пысăк хисепре. Юрий ашшĕ çулнех такăрлатать. Александр Захаров, чылайранпа Пĕчĕк Упакассине хăйĕн хастарлăхĕпе тĕлĕнтерсе тата савăнтарса тăраканскер, ывăлĕн ĕçĕ-хĕлĕпе питех те кăмăллă.

Çак агрофирмăра ĕçлекен, сухаçăсен район тата республика ăмăртăвĕсенче пĕрре кăна мар малти вырăнсене тухнă Николай Захаров /çÿлерех асăннă Захаровсен çывăх тăванĕ тата вĕрентекенĕ/ нумай пулмасть тăван республика чысне Владимир облаçĕнчи Суздаль тăрăхĕнче иртнĕ Пĕтĕм Раççейри сухаçăсен конкурсĕнче хÿтĕленĕ, çĕр-шыври чи лайăх 10 механизатор йышне кĕнĕ.

■ **Геннадий КУЗНЕЦОВ.**
Йĕпреç районĕ

*Тĕрĕслев*

## Сĕркĕч кирлĕ

Етĕрнери «СпецДорСтрой» общество ĕçченĕсем Сăрăн сылтăм çыранне гидромеханика меслечĕпе усă курса хăйăр уçлаççĕ. Унта кăçалхи çу уйăхĕнче тĕрĕслевçĕсем çитсе курнă. Пăхаççĕ те – çырана хăйăр хăвалакан пăрăхран хура шыв юхса таврана сарăлнине, шĕпĕртетсе Сăра аннине асăрхаççĕ. Саккунпа килĕшÿллĕн пулă вăлча сапнă тапхăрта шыва пăтратса ăна канăçсăрлантарма юрамасть.

Предприяти хăйăрлă шыва тасату хатĕрĕ витĕр кăларса сăрăхтарман. Районсен хушшинчи çут çанталăка хÿтĕлекен прокурор саккуна пăснăшăн ООО директорне асăрхаттарнă, çыран хĕррине пăтранчăка сăрăхтаракан хатĕр вырнаçтарма ыйтнă.

## Купана куçарттараççĕ

Прокуратура сотрудникĕсем Етĕрне районĕнчи Иваньково ял тăрăхĕнче те пулнă, Сăр çыранĕпе утнă. Вĕсен çулне хăйăр купи пÿлнĕ. «Саккунпа килĕшÿллĕн çырана ăпăр-тапăрпа хупăрлама юрамасть. Мĕншĕн йĕркене пăсаççĕ?» – тĕлĕннĕ пакунлисем. «Шупашкарăн юхан шыв порчĕ» общество хăйăр тултарнине палăртнă. Çынсене иртсе çÿремелĕх вырăн та хăварман. Порт директорĕ тĕлĕшпе административлă ĕç пуçарнă. Мĕнех, купана урăх вырăна куçарма тивет.

## Ирĕк илмен

Росприроднадзор управленийĕ «Красноармейски ял хуçалăх химийĕ» общество патшалăхăн тивĕçлĕ тытăмĕнчен ирĕк илмесĕрех атмосферăна этемшĕн сиенлĕ япаласем кăларса янине, тавралăха вараланăшăн пĕлтĕрхи I тата IV кварталсемшĕн вăхăтра укça тÿлеменнине палăртнă. ООО иртнĕ çул йăлари хытă каяш пухса турттарни çинчен управление отчет тăратманни те тĕрĕслевçĕсене килĕшмен. Административлă кодекса пăхăнманшăн предприятие тата должноçри хăш-пĕр çынна штраф тÿлеттерме йышăннă.

■ **Михаил ФЕДОРОВ**

**Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаç органĕсен ертÿçисем 2014 çулхи утă уйăхĕнче граждансене харпăр хăй ыйтăвĕсемпе**

**ЙЫШĂНМАЛЛИ КУНСЕМ**

| | | |
|---|---|---|
| А.В.Самойлова | Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – Чăваш Республикин сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕ | 7 |
| В.В.Андреева | Чăваш Республикин информаци политикипе массăллă коммуникацисен министрĕ | 14 |
| И.В.Исаев | Чăваш Республикин çут çанталăк ресурсĕсемпе экологи министрĕ | 21 |
| А.Е.Егорова | Чăваш Республикин конкурент политикипе тарифсем енĕпе ĕçлекен патшалăх службин ертÿçи | 28 |

Хăйсен компетенцине кĕрекен ыйтусемпе Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаç органĕсен ертÿçисем граждансене Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Администрацийĕн халăха йышăнмалли пÿлĕмĕнче çак адреспа йышăнаççĕ: Шупашкар хули, Республика тÿремĕ, 2-мĕш çурт, 105-мĕш пÿлĕм.

Йышăну вăхăчĕ: 16 сехетрен пуçласа 18 сехетчен.

Ыйтса пĕлмелли телефонсем: 62-34-53, 39-36-43.

*Абитуриент-2014*

# Вĕренÿ заведенийĕн алăкне уçар-и?

***Республикăри шкулсенче сыв пуллашу каçĕсем иртнĕ кунсенчех професси вăтам тата аслă пĕлĕвне паракан учрежденисенче йышăну кампанийĕ пуçланчĕ.***

Хальхи вăхăтра Чăваш Енре професси вăтам пĕлĕвĕпе тивĕçтерекен патшалăх 27 организацийĕ, коммерци 3 учрежденийĕ тата аслă шкул 2 филиалĕ ĕçлет. Кăçал вĕсенче абитуриентсем валли пурĕ 8 пин ытла бюджет вырăнĕ хатĕр, çакă пĕлтĕрхинчен 16 процент ытларах. Вĕренме кĕмешкĕн экзаменсем уйрăм пултарулăх, ÿт-пÿ пиçĕхĕвĕ е психологи пахалăхĕ ыйтакан профессисемпе, специальноçсемпе кăна тытмалла. Вĕренме кĕмешкĕн документсем йышăнмалли тапхăр куçăн майпа пĕлÿ илес текенсемшĕн çурла уйăхĕн 15-мĕшĕччен тăсăлать. Ытти майпа вĕренес кăмăллисем валли документсем йышăнас вăхăта кашни организаци хăй çирĕплетет.

Аслă вĕренÿ заведенийĕсенчи тÿлевсĕр вырăнсене кăçал республикăра 3,5 пин çамрăк йышăнма пултарĕ. Чăн та, ку хисеп те пĕлтĕрхипе танлаштарсан пысăкрах. Институт-университетра йышăну кампанийĕ утă уйăхĕн 25-мĕшĕччен пырать. Мĕнлемĕнле специальноçсемпе ăстасене хатĕрлесе кăларни çинчен тĕплĕ информаципе вĕренÿ учрежденийĕсен официаллă сайчĕсене уçса паллашма май пур. Асăрхăр: абитуриент пĕр харăс 5 вуза, 3 тĕрлĕ специальноçа суйласа документсем тăратма пултарать. Вĕренме кĕмелли хутсен стандарт пакетĕнче ыйтса çырни, паспорт, çăмăллăхсемпе усă курма пултарас тăк çакна çирĕплетмелли документсем пулма тивĕç.

Техника енĕллĕ, педагогика, медицина специальноçĕсене вĕренме кĕрес текенсен сывлăха тĕрĕслеттерни çинчен справка е унăн копине тăратма манмалла мар. Аса илтеретпĕр: ППЭ свидетельствине йышăну комиссийĕ абитуриентран ыйтмасть, мĕншĕн тесен заявленире палăртнă кăтартусене федераци пĕрлехи бази тăрăх пур пĕрех тĕрĕслеççĕ. Пултарулăхпа çыхăннă специальноçсене суйлакансен хушма тĕрĕслев витĕр тухма тивĕ. Унашкаллисене аслă шкул хăйĕн ирĕкĕпе çирĕплетет.

Çăмăллăхсем аслă шкула вĕренме кĕрекенсен мĕнле категорийĕсен тĕлĕшпе пулĕçха?

Пĕтĕм Раççей олимпиадисен çĕнтерÿçисемпе малти вырăнсене йышăннисем, пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан предметсемпе тĕнче олимпиадисене хутшăннисем студентсен ретне тÿрех тăма пултарĕç. Олимп, Паралимп, Сурдолимп вăййисенче чемпион ятне çĕнсе илнисен физкультурăпа тата спортпа çыхăннă специальноçсемпе тÿрех вĕренме кĕме ирĕк пур.

Темиçе абитуриентăн балл шучĕ пĕр пек чухне тÿлевсĕр вырăна тăлăх е ашшĕ-амăшĕн хÿтлĕхĕсĕр юлнă çамрăкăн, инвалидăн, шалти ĕçсен органĕсенче, пушара хирĕç кĕрешекен службăра, наркотĕрĕслеврe, таможньăра ĕçлекенсен ывăл-хĕрĕн йышăнма право пур. Хăйĕн пуласлăхне çар хĕсмечĕпе е патшалăх службипе çыхăнтарас тĕллевлисем те çакнашкал çăмăллăхпа усă курма пултараççĕ. Çакна та аса илтерер: çăмăллăхсемпе пĕр вуза вĕренме кĕнĕ чухне кăна тивĕçтереççĕ. Ытти заведение вара пĕтĕмĕшле йĕркепех йышăнĕç.

Математикăпа, физикăпа ППЭре 70 балл е унран та ытларах пухнисене пĕлме: Чăваш Енре вырнаçнă аслă пĕлÿ паракан заведение вĕренме кĕрсен сире малтанхи çул Чăваш Республикин Пуçлăхĕн хушма стипендийĕпе тивĕçтерĕç. Унăн калăпăшĕ уйăхне 2 пин тенкĕпе танлашать.

■ **Ирина ПУШКИНА**

# Çемье

*Хушма кăларăм*

*Килĕшӳ*

## Ваттисен пилĕ чăнлăха çаврăннă



***Канаш районĕнчи Вăрăмпуç ял тăрăхĕнче пушă паракан çурт çукпа пĕрех. Унашкаллисене çамрăксем йышăнсах пыраççĕ: çĕнĕ пӳрт лартаççĕ, хушма хуçалăх ĕрчетеççĕ. Вăрăмпуçăн çĕнĕ урамĕ те капмар та çутă çуртсемпе тулсах пырать. Федераци бюджетĕнчен укçа-тенкĕ куçарса парас тăк çывăх вăхăтрах унта черетлĕ стройка пуçланĕ. Пилĕк ачаллă Николаевсем валли çурт хăтламашкăн пикенĕç.***

– Документсене висĕ çул каяллах пуçтарса патăмăр. Кам пĕлет, тен, кĕтсе те илĕпĕр çавнашкал ырлăха, – шанчăкне çухатмаççĕ-ха Татьянăпа Николай Николаевсем.

Апла пулин те пурнăçра никамран ытла хăйсен вăйне, пултарулăхне шанма хăнăхнă. Халĕ акă ачисем те çирĕп тĕрев пуласса ĕненеççĕ. Асли, Мария, шкул саккипе сыв пуллашса медицина колледжĕнче вĕренме тытăннă ĕнтĕ */сăн ӳкерчĕкре вăл кăна çитмест/*. Ольга 8 класс хыçа хăварнă. Наталья кĕркунне улттăмĕшне кайĕ. Вĕренӳре "пиллĕксемпе" кăна ĕлкĕрсе пыраканскер пирки ашшĕ-амăшĕ "ан куçăхтăрах" теме çеç пултарчĕ. Пиллĕкри Кристинăпа виççĕри Сашук хальлĕхе ялти садике çӳреççĕ.

18 çул каялла çемье тĕвĕленнĕ кун хăйсене аслисем мĕнлерех сăмахсемпе пил панине манман-ха кил хуçи мăшăрĕ Татьяна, Чул хула облаçĕнчи Кстово районĕнче кун çути курнăскер: "Çукран пур тăвăр. Сак тулли ачапăчаллă пулăр..." Çĕнĕ çын çак сăмахсем пурăна киле чăнлăха çаврăнасса тĕшмĕртмен паллах ун чухне. Мăшăрне чунтан савакан Николай кăна тепĕр чухне ĕмĕтне палăртса шӳтлеленĕ: "Футболла выляма пĕр команда çурататпăрах пулĕ?"

– Пиллĕкмĕш хут йывăрлансан район больницине УЗИе кайрăм та тухтăр варта арçын ача тĕвĕленнине хăй те ĕненмерĕ курăнать, темиçе хут тĕрĕслерĕм терĕ. Тăватă хĕр хыççăн йăх тăсакана кĕтсе илнине тăвансем те хамăрпа тан хĕпĕртесе йышăнчĕç, – аса илет висĕ çул каяллахи кăмăллă самантсене пилĕк ача амăшĕ.

Пысăк çемьене тăрантараканĕ, пурлăхпа тивĕçтерекенĕ – кил хуçи Николай Александрович. Маларах милицире ĕçленĕ, юлашки 7-8 çулта Питĕрте вахта мелĕпе тăрăшать.

– Шкултан вĕренсе тухсан Канашра повар-кондитер професине алла илтĕм. Чăн та, кунта качча килсен хамăн специальноçпа ĕçлеме май килмерĕ. Вырăнти ял хуçалăх предприятийĕнче вăй хумашкăн хирĕç пулмăттăм та – вăл та йăшма пуçларĕ çав. Унчченрех "Путь Ленина" районта чи ăнăçлисенчен пĕриччĕ, – сăмах çăмхине малалла сӳтетпĕр килти хуçалăхра хушăран арçын ĕçне те хăйĕн хул пуççи çине тиекен хĕрарăмпа. – Халĕ ав хуняça ватăлчĕ – 83-ри ватă çынна тимлĕхсĕр хăвараймастăн. Паллах, кил хуçи мăшăрĕн статусĕнче кăна ĕмĕре ирттермелле ан пултăрччĕ-ха.

Татьяна Николаевнăн ашшĕпе амăшĕ – Вăрмар тăрăхĕнчи чăвашсемех. Хăй вăхăтĕнче Чул хула облаçне пурăнма куçса кайнă та... Çапла иккен вăл шăпа – вĕсен хĕрĕн ав Чăваш Енрех тĕпленме тивнĕ. Малтанах вырăс хутлăхĕнче пурăннăран тăхăмĕсен чĕлхине япăхрах пĕлнĕскер чăваш каччипе çемье çаврăнсан тăрăшсах чăвашла вĕреннĕ.

– Ял-йыш вăл çемье пекех вĕт: унта хăвăн кĕввӳне кăна калани килĕшӳсĕр. Хуняма, Нина Егоровна, вырăсла калаççах каймастчĕ. Ирĕксĕрех чăвашла перкелешме тиветчĕ, – халĕ ав Чул хула енчи вырăссен хытăрах сассине шута илмесен ентешĕсенчен пĕртте кая мар пуплет Таня.

Выльăх-чĕрлĕх йышлă усранăран Николаевсен çуллахи тапхăрта утă чылай хатĕрлемелле. Телее, Вăрăмпуçсем авалтан пыракан нимене манăçа кăларман-ха. Тăвансем пĕр-пĕрин çĕр лаптăкĕсенчи курăка ушкăнпа çулса типĕтме, тирпейлесе кĕртме хăнăхнă. "Халĕ хĕрарăмсем те газон çулмалли агрегата çăмăллăнах кĕрлеттеретпĕр", – хальхи саманан çĕнĕлĕхĕсенчен ютшăнманнине çирĕплетеççĕ Т.Николаева сăмахĕсем.

Хĕрĕсем те хĕрӳ ĕçре амăшĕнчен юлмаççĕ. Акă Оля çĕр улми анине тăрăшсах кăпкалатать. Кристина та, çум курăка тахçанах паллама вĕренсе çитнĕскер, кишĕр йăранĕсене тасатассишĕн çунать. Машăпа Наташа вара хĕл хырăмĕ пысăккине асра тытса çывăхри вăрман çумĕнчи çаран çине çĕр çырли пуçтарма кайнăччĕ.

– Каникул – ачасен ӳт-пĕвне пиçĕхтермелли чи меллĕ тапхăр. Хăшне те пулин лагере канма ярас темерĕр-и? – тĕпчетĕп нумай ачаллă амăшĕнчен.

– Эпĕ "Сурские зорире", "Лесная сказкăра" канса курнă. Питĕ килĕшнĕччĕ – унта спортзалсем лайăхчĕ, – калаçăва хутшăнчĕ физкультурăпа спорта килĕштерекен Оля.

– Ачасен кăмăлне тивĕçтерме тăрăшатпăр-ха. Кăçал лагерь пирки сăмах хускатмарĕç. "Сана пĕчĕккисемпе йывăр пулать", – терĕç ăна-кăна ăнланма тытăннă аслă хĕрĕмсем.

Кăшт вăхăт иртсенех кĕçĕннисен çумне те куршанак çыпăçĕ акă. Унччен вара Николаевсене хăтлă çурт лартса парĕç-и тен? Çумламалли-типтерлемелли лаптăк тата хушăнĕ ун чухне.

■ **Ирина ПУШКИНА**

## Телейлĕ эсĕ, Нюра аппа...

***Чăвашсен тĕп хулинче Шупашкарта çур миллиона яхăн çын пурăнать. Кам кăна çук кунта! Ытларах, паллă ĕнтĕ, чăвашсем, вырăссем, ун хыççăн вара тутар, мари, ирçе... Еврейсем те пур. Ĕçлеççĕ, вĕренеççĕ, ачи-пăчине ӳстереççĕ. Уявсене вара пĕрле ирттереççĕ – Атăл хĕррине çӳреççĕ, кимĕсемпе ишеççĕ...***

***Шупашкарта Тутар Республикинчен куçса килнĕ чăвашсен йышĕ пысăк. Пăва районĕнчен, Çĕпрел енчен, Нурлатпа Аксу тăрăхĕнчен килнĕ кунта вĕсем. Хăшĕ – «çăмăл пурнăç» шыраса, хула çынни пулас кăмăлпа, ытларахăшĕ – чун туртнипе, «чăн-чăн чăвашсемпе пĕрле пурăнса, аттепе анне панă чăваш чĕлхипе тăраниччен калаçса савăнас шухăшпа килнĕ. Çав тутар чăвашĕсен хушшинче заводра ĕçлекенсем те, строительсем те, поэтсемпе писательсем те, ăсчахсем те пур. Вĕсем Чăваш çĕр-шывне аталантараççĕ, унăн чапне çĕклеççĕ. Сăмахран, Çĕпрел районĕнчи Хулаçырминчен килнĕ Николай Федорович Угаслов паллă строитель, бизнесмен пулса тăчĕ, халĕ вăл Чăваш наци конгресне ертсе пырать; Аксу районĕнче çуралса ӳснĕ Николай Тарасович Савруков – экономика наукисен докторĕ, профессор; Кайпăç енчен килнĕ Раиса Ильинична Ерусланова вара, тухтăра вĕреннĕскер, министра çити çĕкленчĕ, Чăваш Республикин Министрсен Канашĕн председателĕн çумĕ те пулчĕ; Элшел хĕрĕ Галина Серебрякова /Кĕмĕл/ – паллă поэтесса, темиçе кĕнеке авторĕ, РФ Писательсен пĕрлĕхĕн членĕ.***

...1979 çулхи кăрлач уйăхĕн шартлама сиввинче Пăва районĕнчи Элшел ялĕнчен Шупашкара Кузьминсен çемйи куçса килнĕ. Пилĕк ачапа, ялта хăпартнă кермен пек çуртне хупса, кӳршĕ-аршăпа куççуль витĕр сыв пуллашса. Çемье хуçи Санькка колхозра водительте тăрмашнă, унăн арăмĕ Нюра вара выльăхсемпе аппаланнă, хирте ĕçленĕ. Колхоз ертӳçисем пит ярасшăн пулман ял ĕçченĕсене, анчах мĕн тăвăн – çын лайăхрах пурнăç шырать...

«Йывăрччĕ ялта пурнăç, – аса илет Нюра аппа. Çулла сывлама çук шăрăхчĕ, кĕркунне – мăй таран пылчăк. Хĕлле вара кĕрт хӳсе каять – урама тухаймастăн. Газ çук пирки кăмакана вутă-кăмрăкпа хутмалла, шыва пусăран алă вĕççĕн ăсмалла. Манăн вара пилĕк ача, пĕри тепринчен пĕчĕкрех, вĕсене пăхмалла, çитермелле, çумалла, çывăрма вырттармалла. Картиш тулли выльăх усраттăмăр тата». Мĕнле ĕлкĕрнĕ çамрăк хĕрарăм, мĕнле авăнса ӳкмен – ăна вăл хăй кăна пĕлет. Укçа çитсе пыман: колхозра йĕркеллĕ тӳлемен, ялти халăх ĕçке ерме тытăннă.

«Çитет çапла нуша курма, хулана каяс тесе шухăшларăмăр пĕррехинче Саньккапа пĕрле, – тăсать хăйĕн сăмахне Нюра аппа. – Хула вăл – хула, асфальчĕ пур, пылчăк çăрălмасть, витере сысна çурисем сухăрмаççĕ. Ĕçлекен çынна вăхăтра укçа параççĕ, хваттер уйăраççĕ, лавккисенче çăкăртăвар пур. Шкулĕсем лайăх, учителĕсем вăйлă, ачасене тăрăшсах ăс-тăн параççĕ. Пуçра пулсан малалла та вĕренме пулать – институтсем пур, университет та...»



Çапла вара 40 çулти Саньккапа унран 5 çул кĕçĕн Нюра пилĕк ачине пуçтарса Шупашкара килеççĕ. Общежитире пурăнма тӳр килнĕ пĕр вăхăт, палланă çынсем патĕнче те хĕсĕнме тивнĕ. Нумай ачаллă çемьене хула пуçлăхĕсем кĕçех пысăк хваттер параççĕ. Кузьминсен улттăмĕш ача çуралать.

Унтанпа 35 çул хыçа юлнă. Ачасем – висĕ хĕр те висĕ каччă – ӳссе çитĕннĕ, аслă пĕлӳ илнĕ, пурте юрист профессине суйланă.

Каласа парам-ха кăштах вĕсем çинчен.

Асли, Валери, Хусан университетĕнчи юридици факультетĕнчен вĕренсе тухсан Тутар Республикин Прокуратуринче чылай вăхăт ĕçлерĕ, юстицин аслă канашçи. Чăваш каччи хитре те ăслă тутар хĕрне качча илнĕ. Мăшăрĕ – филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ, Хусан университечĕн доценчĕ.

Нюра аппан иккĕмĕш ывăлĕ – Эрик. Пиччĕшĕ пекех Хусан университетне пĕтернĕ. Чылай вăхăт следовательте, судьяра, суд председателĕн çумĕнче ĕçлерĕ, нумаях пулмасть пенсие тухрĕ.

Виççĕмĕш ывăлĕ вара – Миша. Шкул пĕтернĕ хыççăн вăл Ростов хулине кайрĕ, çавăнти университетăн юридици факультетне вĕренме кĕчĕ. Дипломпа Шупашкара таврăнсан пултаруллă каччăна юстици министерствине ĕçлеме илчĕç, унтан вăл министр çумĕ таран çĕкленчĕ. Каярахпа ЧР Президенчĕн Администрацийĕнче ĕçлерĕ. Çав хушăрах Михаил Александрович аспирантура пĕтерчĕ. Халĕ вăл – юридици ăслăлăхĕсен кандидачĕ, доцент. Раççей патшалăх службине хатĕрлекен академин /РАНХиГС/ Шупашкарти филиалĕн директорĕ, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ юрисчĕ.

Нюра аппан хĕрĕсем пиччĕшĕсен çулĕпех кайрĕç. Аслă хĕрĕ Лена халĕ Регистраци палатинче ĕçлет, çынсен пурлăхне тишкерсе шута илет; иккĕмĕшĕ – Эльвира – Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕнче тăрăшать; кĕçĕнни – Ирина, вăл та юрист.

– Эпĕ аттесĕр ӳсрĕм, упăшка – амăшĕсĕр, ачаранах ĕçе кӳлĕннĕ. Нумай вĕренме май пулмарĕ. Çавăнпа та пулĕ ачасем лайăх вĕренччĕр тесе пит тăрăшрăмăр, яланах пăхса-пулăшса тăтăмăр. Эпĕ вĕсене: «Лайăх вĕренĕр, кукку пек пулăр!» – тесе калаттăм. Куккăшĕ, ман пичче Аксентий Алексеевич Урметов, шкулта пиллĕксемпе вĕренсе малтан – Пăвари медучилищĕре, кайран Хусанта мединститут пĕтерчĕ, врач пулчĕ. Питĕ тăрăшуллăччĕ вăл... 40 çул ытла çынсене сиплерĕ, чунтан тăрăшрĕ, тĕрлĕ наградăна тивĕçрĕ. Халь тивĕçлĕ канура ĕнтĕ. Пирĕн ачасемшĕн вăл яланах чĕрĕ тĕслĕх пулнă, – чунне уçать Нюра аппа.

Паллă ĕнтĕ: çавăн чухлĕ ача çуратса ӳстерме çумра шанчăклă çын кирлĕ. Нюра аппа мăшăрĕ – Кивĕ Мертлĕ каччи, Александр Иванович Кузьмин. Тăрăшуллă, сăпайлă, арăмне юратса хисеплекен арçын вăл. Çур ĕмĕре яхăн ĕнтĕ вĕсем пĕрле, ачасен пурнăçĕ ăнăçнишĕн савăнаççĕ, мăнукĕсемпе киленеççĕ. Нумаях пулмасть мĕн пур тăванĕ пуçтарăнса Александр Иванович 75 çул тултарнине паллă турĕç. Часах, утă уйăхĕн 18-мĕшĕнче, Анна Алексеевна та /Нюра аппа/ хăйĕн 70 çулхи юбилейне кĕтсе илĕ.

Çывхарса килекен паллă кун ячĕпе сумлă хĕрарăма ăшшăн саламлас, ырлăх-сывлăх, иксĕлми телей сунас килет.

■ **Николай БАХТИНОВ,**
**И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУ доценчĕ**

*Пурнăç*

## Асрах 100 çулти хура-шур



***Чăваш Енре I Микула патша вăхăтĕнче кун çути курнă çынсем те пурăннине пуçа шăнăçтарма йывăр. 1914 çулта çĕртме уйăхĕнче çуралнă Агреппина Тимофеевна Тимофеевăна та шăпа пĕр ĕмĕр тăсăлакан кун-çул парнеленĕ. 100 çулти ватă кукамайăн аса илмелĕх савăнăçĕ те, хуйхи те – темĕн чухлех.***

***Унăн ĕçченлĕхĕ, иксĕлми вăй-халĕ çинчен халап хывма та май пур. Паян та пĕр вырăнта ларасшăн мар хастар хĕрарăм. Ачисен, мăнукĕсен, мăнукĕсен ачисен пурнăçĕпе кăсăклансах тăрать.***

Агреппина Тимофеевнăн пурнăç кĕнекине çĕнĕрен пăхса тухма пикенсен... 7 çулта хăр тăлăха юлнăскерĕн шăпине ăмсанма-и! Пĕчĕкскерĕн ашшĕ-амăшĕн хӳтлĕхĕсĕр, ăшшисĕр – хăйĕнех – тĕнчене курма-пĕлме тивнĕ-çке.

Шкулта вĕренме май килмен. Пурнăçшăн ĕçлесе кĕрешмелле пулнă. Çынсем патне кĕтӳçе кĕрĕшнĕ. 12 çула çитсен ял кĕтĕвне кĕтме тытăннă. Çакăншăн никам та укçан тӳлемен, апатлантарнипех çырлахнă. Вун тăваттăра фермăна ĕçлеме вырнаçнă. Тĕнчен иккĕмĕш вăрçи вăхăтĕнче Етĕрне хулин хутлăхне окопсем чавма кайнă. Çĕмĕрле тăрăхĕнче пуйăссем валли вутă-шанкă хатĕрленĕ – вăрман каснă. Ун хыççăн Çĕрпӳре çул сарнă çĕрте тăрмашнă. Мĕн калăн: Агреппина Тимофеевнăн шăпи çăмăл килмен... Унтанпа нумай шыв-шур юхнă пулсан та вăрçă вăхăтне кинемей час-часах аса илет. Хăш-пĕр саманта тĕлĕкре тĕлленни çав тапхăр унăн пурнăçĕнче – çĕр-шыври мĕльюн çын кун-çулĕнчи евĕрех – тарăн йĕр хăварнине çирĕплетет.

Вăрçă чарăнсан, мĕн пур халăх ура çине майĕпен тăма тытăннă чухне, чăтăмлă чăваш хĕрарăмне шăпа каллех тĕрĕслет. Икĕ ачаллăскерĕн пурăнмалли кĕтес пулман /ашшĕ килĕнчен авланнă пиччĕшĕ кăларса янă/. Элĕк районĕн больницине санитаркăна ĕçлеме вырнаçнăскер тĕпренчĕкĕсемпе кунти... моргра çывăрса пурăннă. 4 çул тӳснĕ çапла. Унтан çĕр пӳртре кунпа çĕре кĕскетнĕ. Больницăра ĕçлесе илнĕ укçапа çĕвĕ машини туянать упăшкасăр хĕрарăм. Тӳшек, тăлăп-кĕрĕк çĕлесе сутма тытăнать. Çапла майпа янтăлать те хăйсене пурăнма тата выльăх-чĕрлĕх валли çĕр пӳртсем. Асли, Антонина, 8 класран вĕренсе тухсан аякри çĕрсене ĕçлеме каять. Тăван яла таврăнсан фермăна вырнаçать. Унăн пулăшăвĕ çемьешĕн пĕлтерĕшлех пулнă çав: кĕçех Тимофеевсем хăйсене ятăн пĕрремĕш йывăç çурт лартаççĕ.

Паян вара Агреппина Тимофеевна Элĕк районĕнчи Иштек ялĕнче капмар та илемлĕ çуртра, пысăк çемьере пурăнать. Хĕл кунĕсене хулари хĕрĕ патĕнче ирттерет пулин те тĕнче чĕрĕлсен тăватă стеналлă хваттерте хупăнса лараймастех. Тăван ял, килçурт, илемлĕ сад кăчăк турттаççĕ ăна. «Качакасем мĕнлеши унта мансăр?» – пăшăрханать вăл хĕл каçипех. Ватă çын вĕсене пăхса пурнăçри йывăрлăхĕсене манать, хăйне телейлĕ туять.

– Шел, ĕлĕкхи кунсене пĕрле аса илмешкĕн тантăшăмсем юлмарĕç, – пăшарханать 100 çулти кинемей.

■ **Сюзанна СКВОРЦОВА**

## Пĕр тăван Артемьевсем – тухтăрсем

Çĕньял Пукашра Артемьевсен туслă çемйине ял-йышра пурте хисепленĕ. Кил хуçи Федор Филиппович чухăн ӳснĕ пулсан та аслă пĕлӳ илме май тупнă. Вунă çул кăна мар ялти шкула ертсе пынăскер ăна çĕнетме нумай тăрăшнă. Ун чухне ялсене çут çанталăк газĕ çитмен-çке. Çаврăнăçуллă директор шкула пăспа ăшăтма меслет тупма пултарнă. Сĕрме купăс питĕ ăста калама пултарнăран тăван ялта çеç мар, кӳршĕ Вăта Пукашра та пĕчĕк хор кружокĕсем йĕркеленĕ. Концертсем хатĕрлесе кӳршĕ ялсене çӳренĕ. Çамрăк купăсçăсем Нетуç Шуркки, Лисаппа Тули вĕрентекене питĕ пулăшнă. Концертсенче литературăна кăмăллакан Юрий Петров, Клементий Казанов, Пукаш Тули, Валентин Янкай, Виталий Аршинов, Маркел Илларионов хăйсен çĕнĕ сăввисене вула-вула панă. Вырăнпа выртакан Альпăрт Канаш поэтăн сăввисене халăх патне унăн çамрăк тусĕ Пукаш Тули çитерме тăрăшнă. Этнескерти концерт хыççăн вĕсене вырăнти ура çинче çирĕп тăракан усламçă Альберт Иванов хăйĕн çĕнĕ, тин юхтарнă пылне чĕреспех сцена çине лартса панине те вырăнти халăх халĕ те манмасть-ха.

Федор Филипповичăн мăшăрĕ Римма Васильевна та Çĕньял, Хуракасси шкулĕсенче кунçулне ĕмĕрленĕ. Истори вĕрентнĕ. 80 çул урлă ярса пуснă ветеран-педагог патне паян та шкул ачисем ушкăнпах çӳреççĕ: ăс илме, ял историне тĕпчеме...

Висĕ тухтăр çитĕнтернĕ Артемьевсем Çĕньялта. Асли /1962 çулта çуралнă/ – Генрих Федорович Артемьев. Хуракасси шкулĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУри медфака çул тытнă. 1990 çулта хĕрлĕ дипломлă специалист пулса тухать.

1985-1987 çулсенче çарта пулнă хыççăн тăван тăрăха таврăнать, Çĕнĕ Шупашкарта хăйĕн профессийĕпе ĕçлеме пуçăнать. Ăслăлăх ĕçĕсем те çырать тухтăр. Генрих Федоровичăн паянхи куна – 3 мăнукпа мăнукĕн пĕр ывăлĕ: Данил, Никита, Мила, Аня.

Татьяна Федоровна Артемьева та пиччĕшĕн çулĕпех утать: ЧПУра аслă пĕлӳ илет. Вăл – офтальмолог. 1989 çултанпа Шупашкарти «Куç микрохирургийĕ» комплексра вăй хурать. Куçпа аптăракан ентешĕсене ялан пулăшма хатĕр Татьяна. Акă Матвей Семенович Соловьев, 90 çулти вăрçă ветеранĕ, асăннă сыватмăшра сипленнĕ хыççăн чиперех куракан пулнă.

Галина Ириткова ĕç ветеранĕн те тăван ялта çитĕннĕ тухтăр тĕлĕшпе чĕререн ăшă сăмахсем çеç тухаççĕ. Артемьевсен кĕçĕн хĕрĕ – Надежда. Шупашкарти медколледжра психолог специальноçне алла илнĕскер тĕп хулан 3-мĕш больницинче тăрăшать. Пиччĕшĕпе аппăшĕ пекех пациентсен умĕнче ырăлăхĕпе, сăпайлăхĕпе палăрасшăн çунать.

■ **Анатолий ШОКЛЕВ.**
Сĕнтĕрвăрри районĕ

*Пĕчĕккисем пуплеççĕ*

### Чи-чи-чи... асанне

Тăваттăри Артем асламăшĕпе садикрен таврăнать. Çула май шăпăрлан аслине апатçимĕç лавккине кĕмешкĕн ӳкĕте кĕртет. Тутлă ĕçме-çиме туянса тухаççĕ вĕсем унтан.

– Эсĕ – тĕнчери чи ырă, чи лайăх, чи-чи-чи... асанне вĕт, – кăмăлĕ тулнăран чĕвĕлтетет мăнукĕ.

– Çук пуль, Артем. Ахăртнех, эпир санпа тин кăна тĕнчери чи лайăх лавккаран тухрăмăр, – чун хăпартлантармăш сăмахсем мĕнпе çыхăннине чухласа калать асламăшĕ.

### «Анне, эсĕ хĕр ача-им?»

Виççĕри Миша ялан джинс шăлаварпа çӳреме кăмăллакан амăшĕ илемлĕ кĕпе тăхăннине курать те тĕлĕнсе çапла калать:

– Анне, эсĕ «моднăй» пулнине тахçанах пĕлнĕ-ха эпĕ. Анчах эсĕ хĕр ача иккенне... пĕлме-е-ен!

### «Пулăçсем» ĕмĕтленеççĕ

Висĕ тус – Дима, Данил, Кирилл – пулăра. Ылтăн пулă тытсан унран мĕн ыйтасси пирки ĕмĕтленеççĕ.

– Эпĕ чаплă машина, ют çĕр-шывра кăларнине, ыйтăттăм. Çитĕнсе çитсен ăна туянас тесе ĕçлемелле те пулмĕччĕ, – тет Дима вăлта выляни-выляманнине сăнанă май.

– Мĕн вăл машина, эпĕ икĕ хутлă коттедж ыйтнă пулăттăм: авлансан, ачасем çуралсан кашнине уйрăм пӳлĕм тивĕçĕччĕ, – кăмăлне палăртать Данил.

– Эпĕ... Шкулта пĕр предметпа та тĕрĕслев ĕçĕ çырмалла мар йĕркене çирĕплетме тархаслăттăм, – чи çунатлă ĕмĕтне уçать вĕренӳре «3»-семпе туслă Кирилл.

■ **Анна КУПРИЯНОВА**
**вăрттăн итленĕ**

**Кăларăма Ирина ИВАНОВА хатĕрленĕ.**

*Тĕрĕслев*

# Саккуна пăснă

***ЧР юсанмалли учреждениcенче саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан Шупашкар прокуратури УФСИН колонийĕсенче граждансен ыйтăвĕсене мĕнлерех тишкерсе татса панине тĕрĕсленĕ те уголовлă айăплава пурнăçламалли саккунсене пăснине тупса палăртнă.***

4-мĕш ИКра граждансен ыйтăвĕсене пăхса тухмалли йĕрке çинчен калакан саккуна уяман: айăпланнисен колони пуçлăхĕн ячĕпе çырнă ыйтăвĕсене регистрацилемесĕрех папкăсене çĕлесе хунă, тĕрĕссипе, вĕсене йĕркеллĕ тишкермен те.

Çакнашкаллине 1-мĕш колонире те тупса палăртнă. Пĕр гражданин ристан хăйне тата унăн çемйине телефонпа шăнкăравласа хăратни çинчен евитленĕ. Анчах çак ыйтăва тĕпчемен, колонин тивĕçлĕ службисем ыйтăва юсанмалли тепĕр колоние куçарма ĕлкĕрнĕ ристана тĕрĕслемешкĕн унта ярса паман.

Камерăсене пăхса çаврăннă май режима сĕмсĕррĕн пăсакансене хупса усраканнисен хушшинчи стенасенче шăтăксем пуррине асăрханă. Апла тăк çав камерăсенчи ристансем пĕр-пĕринпе ирĕклĕн калаçма кăна мар, пĕр-пĕрне тĕрлĕ япала пама та пултараççĕ. Камерăсене колони сотрудникĕсем тĕрĕслесех тăраççĕ, анчах çав вăрттăн шăтăксене маларах асăрхаман. Е асăрхамăш тунă-и?

Тĕрĕслев кăтартăвĕсене тĕпе хурса ятарлă прокуратура 4-мĕш тата 1-мĕш колонисен пуçлăхĕсен ячĕпе çитменлĕхсене пĕтерме сĕнсе представлени тăратнă.

■ **Александр ЗОТОВ,**
**ЧР юсанмалли учреждениcенче саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан Шупашкар прокурорĕ**

*Фестиваль*

# «Паха тĕрĕ» – «Ылтăн хохлома» уявĕнче

***Чул хула облаçĕнчи Семенов хулинче халăх ӳнер промыслин Пĕтĕм тĕнчери вун пĕрмĕш «Ылтăн хохлома» фестивалĕ иртнĕ. Чăваш Республикинчен унта ӳнер промыслин «Паха тĕрĕ» фирми хутшăннă.***



Фестиваль кунĕсенче хулан тĕп лапамĕ тата çывăхри урамсем «Талантсен асамачĕ» пулса тăнă. Хăнасем – вĕсем Раççейĕн тĕрлĕ регионĕнчен тата чикĕ леш енчен те пулнă – тем тĕрлĕ ĕçпе паллашма пултарнă. Хурăн хуппинчен тунă теттесемпе хуçалăхра усă курмалли япаласем, тиртен, кĕленчерен, тăмран, йывăçран тата ытти чĕр-тавартан ăсталанă хатĕрсем куракана тыткăнланă. Паллах, пирĕн тĕрĕ ăстисем те хăйсен пултарулăхĕпе тĕлĕнтернĕ. Акă Анастасия Андреева художница чăваш тĕрри тĕлĕшĕпе ăсталăх класĕ ирттернĕ. Семеновра пурăнакансем пурте тенĕ пекех вырăссем пулсан та, чăваш тĕррин вăрттăнлăхĕпе кăсăкланакансем те тупăннă. Чăваш Ен ал ĕç маçтăрĕсем çавăн пекех Беларуç, Узбекистан, Эстони, Япони, ытти çĕр-шыв халăх промыслипе, декораци хушма искусствипе паллашма май тупнă.

Фестиваль вăхăтĕнчех мода театрĕсен «Чул хула асамачĕ» конкурсĕ те иртнĕ. «Паха тĕрĕ» пикисем те хутшăннă унта, авалхи тата хальхи вăхăтри наци тумĕпе паллаштарнă.

■ **Надежда СМИРНОВА**

*ЧР Пуçлăхĕн парнисемшĕн*

# Республика фестивалĕнче – спортпа туслă çемьесем

***Юлашки çулсенче ашшĕ-амăшĕпе ачисем спортпа туслашма тытăнни сисĕнет. Çывăх тăвансене сывă пурнăç йĕркине тытса пыма хăнăхтарас тĕлĕшпе патшалăх та сахал мар ĕç тăвать: çемьесем валли вун-вун мероприяти çулсерен йĕркелеççĕ.***



Çак кунсенче Канаш хулинче иртнĕ республика фестивалĕ спортпа туслă çемьесемшĕн чăн-чăн уяв пулса тăнă. Чăваш Енĕн тĕрлĕ кĕтесĕнчен пухăннă 34 команда Республика Пуçлăхĕн Михаил Игнатьевăн парнисене çĕнсе илессишĕн тупăшнă. Пысăк та пĕлтерĕшлĕ пулăмпа вĕсене ЧР физкультурăпа спорт министрĕн çумĕ Сергей Шелтуков, Канаш хула администрацийĕн ĕçсен управляющийĕ Дмитрий Сафронов саламланă. Çемьесем ишес, дартс енĕпе, çăмăл атлетика эстафетинче тата баскетбол турнирĕнче вăй виçнĕ. Ăмăрту пĕтĕмлетĕвĕпе 9 çула çитмен ачаллă çемьесен хушшинче Йĕпреçри Калитовсем çĕнтернĕ. Иртнĕ çулсенче те фестивальте малти вырăнсене йышăннăскерсем эстафетăра, ишевçĕсен тупăшăвĕнче тата ытти турнирта лайăх кăтартусемпе палăрнă. Çак ушкăнрах Шупашкар районĕнчи Цветковсемпе Çĕрпӳ тăрăхĕнчи Солоденовсем пьедестал çине хăпарнă.

Иккĕмĕш ушкăнра /ашшĕ-амăшĕпе 10-12 çулсенчи ывăлĕ/ эстафета, дартс тата баскетбол ăмăртăвĕсенче çĕнтерсе Çĕнĕ Шупашкарти Никитинсем чи сумлă парнене тивĕçнĕ. Етĕрне районĕнчи Ватраскинсемпе Шупашкарти Полетаевсен награда пухмачĕ «кĕмĕлпе» тата «бронзăпа» пуянланнă. Иккĕмĕш ушкăнра вара аслисемпе пĕрле 10-12-ри хĕрĕ старта тухнă. Унта Сĕнтĕрвăрринчи Андреевсене никам та çитеймен: кашни турнирта пысăк балсем пухса çемье пĕрремĕш вырăн йышăннă. Республика фестивалĕнчен ăмăрту хуçисем те аййкинче юлман: Канаш хулин чысне пурĕ 5 çемье хӳтĕленĕ. Владимировсемпе Дадюковсем вара пуринчен маттуртарах пулнă.

■ **Андрей МИХАЙЛОВ**

*Суд залĕнчен*

# Çӳçĕ вăрăм та...

***Çӳçĕ вăрăм – туртмалăх пур. Арçын çакăнпа усă курнă та: «Хĕрарăма çӳçĕнчен урай тăрăх сĕтĕрнĕ, çӳçне çăла-çăла илнĕ...» – уголовлă ĕçри çак йĕркесене вуласан чун çӳçенет.***

Ку çеç те мар: Тăвай районĕн 30 çулти арçынни Александр Максимов арăмне кĕвĕçсе çине-çинех хĕненĕ, тумтирне турта-турта çурнă, çурăмĕнчен сăра кĕленчипе çапнă... Çапла темиçе кун асаплантарнă – пуш уйăхĕн 14-мĕшĕнчен пуçласа 17-мĕшĕччченех. Хĕненĕ-хĕненĕ те – каннă, унтан татах... Арăмĕ ыратнипе йынăшни, хĕнеме чарăнмашкăн тархаслани ăна хĕрарăма татах нушалантарма хавхалантарнă кăна тейĕн – татах çапнă, пăвнă. Темиçе кунран тин хĕрарăм пӳртрен тухса тарма пултарнă, амăшĕ патне çитсе полицие чĕнсе илнĕ.

Дознани вăхăтĕнче те, судра та Максимов хăйĕн айăпне тунман. Суд ăна айăпласа çулталăк та 7 уйăхлăха ирĕклĕхне чикелеме йышăннă. Халь арçынна уголовлă айăплава пурнăçлакан инспекци тĕрĕслесе тăрĕ. Суд палăртнă тивĕçсене пурнăçламасан е йĕркелĕхе пăссан условнăй айăплава ирĕклĕхсĕр хăварассипе улăштарма, арçынна колоние ăсатма пултарĕç.

■ **Оксана ЯСТРЕБОВА,**
**Тăвай районĕн прокурорĕ**

*Яваплăх*

# Парăма пула – çуртсăр, çĕрсĕр

***Ш. пысăк парăма кĕнĕ: страховани тӳлевĕсем, ПАИ штрафĕсем, транспорт тата çĕр налукĕсем, кредит тӳлевĕсем – пĕтĕмпе 5 млн тенкĕ ытла. Парăма татма васкаман та – суд приставĕсен Шупашкарти Мускав районĕн пайĕ суд йышăнăвне пурнăçламалли производство пуçарнă.***

Арçынран укçа шыраса илес тĕллевпе А. тавăç пуçарнă. Çак хĕрарăм ăна 2009 çулхи раштаврах 2 млн тенкĕ кивçен панă. Килĕшӳре укçана çулталăк çурăлăха панине, çулталăкри 30% виçепе тавăрса памаллине çирĕплетнĕ. Анчах укçана каялла кĕтсе илеймен, çавна май судран хайхи парăма тата килĕшӳре палăртнă процентсене шыраса илме ыйтнă.

Мускав районĕн сучĕ унăн тавăçне тивĕçтернĕ, анчах туллин мар – 3,5 млн тенкĕ шыраса илнĕ. Тата 900 пин тенкĕ парăм юлнă. Ш. ăна тавăрса паманнине кура приставсен хушша кĕме тивнĕ. Вĕсем арçыннăн çĕр лаптăкне тата çав лаптăкри 155 тăваткал метрлă çуртне арестленĕ. Çакăн çинчен хуçине пĕлтернĕ, парăма татмасан хайхи пурлăха сутлăха кăларасси, ăна сутнинчен илнĕ укçана парăма татма ярасси çинчен асăрхаттарнă. Лешĕ çакна та илтмĕш тунă.

Приставсем, паллах, шӳтлемен: пурлăха экспертсем хакланă – 5,5 млн тенкĕлĕх. Сутлăха кăларнă. Чăн та, вăл сутăнман. Саккунпа килĕшӳллĕн хайхи пурлăха парăм шучĕпе А.-на туянма сĕннĕ. Хĕрарăм хăйĕн правипе усă курса çуртпа çĕре туянма килĕшнĕ. Арçыннăн хăйĕн умĕнчи парăмĕпе пурлăхăн чăн хакĕ хушшинчи уйрăмлăха тӳленĕ, çав укçана приставсен пайĕн депозитне хывнă, вăл Ш.-н ытти кредитор умĕнчи парăмĕсене татма кайнă. Анчах вăл та парăма туллин татма çитеймен – тата 200 пин тенкĕ юлнă. Приставсем, паллах, Ш.-ран хăпмаççĕ – юлнă парăма та шыраса илеççех.

■ **К.НИКОЛАЕВ**

# Килĕшӳсĕрех ĕçлеттернĕ

***Шупашкарти Калинин районĕн прокуратури налук инспекцийĕпе пĕрле тĕп хулари Ашмарин урамĕнчи Кăнтăр пасарĕн территорийĕнче суту-илӳпе ĕçлекен предпринимательсем ĕçлев саккунĕсене мĕнле пурнăçланине тĕрĕсленĕ те – йĕркене пăснă тĕслĕхсене тăрă шыв çине кăларнă.***

Ĕçлев саккунĕн 67 статйипе килĕшӳллĕн ĕçлекенпе обязательнăй йĕркепе çырса килĕшӳ тумалла. Кодексăн 68 статйинче çынна ĕçе йышăннине хайхи ĕç килĕшĕвĕ çине таянса ĕç параканăн хушăвĕпе çирĕплетмелле.

Пасарти тĕрĕслев вара кунта саккунăн асăннă требованийĕсене уяманнине тупса палăртма май панă. В.Головин, М.Кушмарова, А.Николаева, С.Волосникова, В.Митин предпринимательсем «сутуçă» должноçа йышăннă çынсене йĕркене пăхăнмасăр ĕçлеттернĕ. Урăхла каласан ĕçшĕн тӳлемелли «вăрттăн схемăпа» усă курни, шалăвăн чăн виçине пытарни куç кĕрет.

Саккуна пăсрăн – явап тытмалла. Тĕрĕслев кăтартăвĕсене тĕпе хурса район прокуратури КоАПăн 5.27 статйин 1-мĕш пайĕпе адмĕçсем пуçарнă.

■ **Александр ТОЛСТОВ,**
**Шупашкарти Калинин районĕн прокурорĕ**

*Пурнăçран*

# Сăвăс



Сăвăс – эрешмен евĕрлĕ пĕчĕк çеç кăпшанкă. Юн ĕмекенсен ушкăнĕнчен. Ытларах вăрмантан çыпăçса килеççĕ çын çумне. Ӳте кĕрсе ларсан – кăларма йывăр. Çавăнпа та аслисем ачасене йывăçсенчен пăрăнса иртме, вăрмантан тухсан та, киле çитсен те, пӳрте-çурта кĕриччен, кĕпе-тумтире хывса силлеме, пĕр-пĕрин кĕлеткине лайăх тĕрĕслеме вĕрентеççĕ. Малтанах сисместпĕр те сăвăс ӳте кĕрсе ларнине. Каярахпа кĕçĕттерсе ыратма пуçлать, унтан ӳт шыçса хĕрелсе каять. Хăш чухне çынна вĕлерме те пултарать.

Пĕррехинче юлташăмăн купарчинче пĕр сăвăс «ырлăх» тупнă. Малтан Лена ăна пӳрлешке тесе шухăшланă. Тепĕр икĕ-виçĕ кунран кăна çак вырăн çăпан пек мăкăрăлма пуçланă та хĕр ача лараймиех пулнă. Ирĕксĕрех ялти фельдшер патне кайма лекнĕ. Чакаласа кăларсан та шыçă иртсе кайман. Температури хăпарса кайнă, ăш-чикĕ пăтраннă. Ăна васкавлă пулăшу машинипе пульницăна илсе кайнă. Шыççа касса уçсан çакă паллă пулнă: сăвăсăн пуçĕ ӳтрех юлнă иккен. Çулталăк иртсен те: «Ыратать тата илемсĕр çĕвĕ юлчĕ», – тетчĕ Лена. Юрать-ха, курăнмалла çĕрте мар.

Эпĕ вара хам çума сăвăса клубра çыпăçтартăм. Маттур, илемлĕ сăн-питлĕ каччă ташлама чĕнчĕ, кайран киле ăсатса ячĕ. Виçĕ çул çӳрерĕм, кансĕрленине туймарăм, хам та сисмерĕм вăл ман чĕрене чакаланса кĕрсе ларнине: унăн арăмĕ пулса тăтăм.

Çак сăвăс манăн укçана юрататчĕ. Хăй те япăх вырăнта ĕçлемест, укçине те манран кая илмест, анчах вĕçĕмсĕр манран укçа ыйтса тăнран ярать. Хуçалăхра мĕн те пулин çĕнетмелле – манран укçа тилмĕрет. Хăйне валли çипуç туянмалла – каллех манăн енчĕк пушанать. Кирек ăçта кайсан та – театра е хăнана, е столовăйне кĕрсен:

– Марина, эсĕ тӳле-ха. Эп паян укçа чиксе тухма маннă, – тет.

Çитменнине тата такама та киле çавăтса килме пуçларĕ, шăнкăравлать те:

– Марина, апат-çимĕç хатĕрле-ха. Лавккана кайса кил. Эпĕ хăнасемпе пыратăп.

Кашни кун уяв унăн: е хăнасене илсе пырать, е хăй хăнара савăнать. Манăн вара хама кирлĕ ĕçе тума та вăхăт çук. Чупса пӳрте-çурта тирпейлетĕп, апат-çимĕç хатĕрлетĕп, эрехне кайса туянатăп. Тата хам çиекен апата лартса памалли çук: чи лайăххи, чи тутли, чи хакли кирлĕ. Вĕсем ĕçсе-çисе, юрласа-ташласа савăнаççĕ те тухса каяççĕ. Манăн вара каллех чашăк-тирĕк çумалла, урайне тасатмалла, сĕтел-пукан çи виттисене улăштармалла...

Тепринче тата мотоцикл сăпкинче çамрăк пĕр хĕрарăма лартса килчĕ. «Хăни» темшĕн пӳрте кĕме килĕшмерĕ курăнать, арçын пĕччененех кĕчĕ:

– Марина! – тет. – Чӳречерен пăх-ха, кама куратăн?

– Санăн мотоцикл сăпкинче ларакан пĕр хĕрарăма.

– Çав хĕрарăм манăн пĕрремĕш юрату пулнă.

– ???

– Эсĕ тем ан шухăшла, вăл тахçанах качча кайнă, ачисем те пĕрре анчах мар. Халĕ Хусанта пурăнать. Яла курма килнĕ те – ăнсăртран тĕл пултăмăр. Вăйпах ларса килчĕ. Арăмна кăтарт-ха тет.

– Эппин ма пӳрте кĕмерĕ мана курасах килет пулсан?

– Хăратăп тет.

– Халь манăн мĕн тăвас? Хамăн тухса кăтартас-и?

– Çук, – тет. – Эсĕ мана укçа парса яр-ха. Эпĕ ăна кăштах хăналатăп тĕл пулнă ятпа, атту лайăх мар.

– Мĕн чухлĕ кирлĕ вара сире тĕл пулнине паллă тума?

– Ну, пĕр çур литр эрех тата çырткаламалли илмелле пулать ĕнтĕ.

– Эрехне темлине ĕçет ĕнтĕ вăл?

– Тиркемест, кирек мĕнлине те ярăнтарать.

– Эсĕ тата мĕнле пĕлетĕн тиркеменнине, пĕрре анчах мар пĕрле ĕçнĕ-и-мĕн?

– А-а, пĕрле ӳснĕ вĕт. Çамрăк чухнех сăмакун тиркеместчĕ улахсенче.

Юриех çакна укçа кăларса тыттартăм. Илчĕ вĕт, намăссăр. Пĕчĕк ача пек савăнса кайрĕ.

– Хырăмусем выçсан апат çиме килĕр, апат хатĕр пулĕ. Кĕтетĕп вара! – тетĕп.

Килчĕ. Пĕччененех. Питĕ савăнăçлă, вĕçсе кайманни кăна.

– Санăн арăму ытла та лайăх çын. Эсĕ унтан нихăçан та ан уйрăл, ун пеккине урăх тупаймастăн терĕ мана Лариса.

– Чăнах-и? – тетĕп.

– Чăнах, чăнах! Пĕр суймасăр калатăп.

– Сăвăс! Манăн юна хăв ĕçсе пурăнни çитмерĕ, тата еркĕнӳсемпе мĕн пур алкаша ĕмтерме киле илсе килме пуçларăн. Тасал куç умĕнчен!

Аран уйрăлса пĕтрĕм усал çав «чĕр чунран».

■ **Роза КĔРХИ.**
Вăрнар районĕ

*Тем те пĕр*

● Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи вĕçленнĕ хыççăн чĕрĕк ĕмĕр иртсен Вязьма çывăхĕнчи вăрманта çĕр ăшнелле тăрăннă танка тупнă. Машинăра механик-водителĕн шăмми-шакки пулнă. Унăн планшет-кинче юратнă хĕрĕн сăн ӳкерчĕкĕ тата яма ĕлкĕреймен çырăвĕ упранса юлнă.

«Сывă-и, Варя! – тенĕ çырура. – Çук, тĕл пулаймăпăр эпир санпа. Ĕнер кăнтăрла эпир Гитлерăн тата тепĕр колоннине тустартăмăр. Фашист снарячĕ айккинчи броняна шăтарчĕ, шалта çурăлчĕ. Эпĕ машинăна вăрманалла илсе кайнă хушăра Василий вилчĕ. Суранăм питĕ йывăр. Василий Орлова хурăн ращинче пытартăм. Унта çутăччĕ. Василий мана пĕр сăмах та чĕнеймесĕр, хăйĕн илемлĕ Зойине, çутă çӳçлĕ Машине нимĕн те каласа хăвараймасăрах вилчĕ. Çапла виçĕ танкистран пĕччененех юлтăм. Тĕттĕмленсен вăрмана кĕтĕм. Çĕрĕпе асаплантăм, юн нумай сухатрăм. Халĕ кăкăра çунтаракан ырату тамалчĕ, чунра лăпкă. Веçех туса çитерейменшĕн питĕ кӳренмелле. Çапах та эпир мĕн тума пултарнине веçех турăмăр. Пирĕн юлташсем тăшмана хăваласа ярĕç, вăл пирĕн уйсемпе, вăрмансемпе çӳреме тивĕçлĕ мар. Эсĕ, Варя, пулман тăк, пурнăça эпĕ нихăçан та çапла пурăнса ирттерейместĕм. Эсĕ мана пур çĕрте те пулăшрăн: Халхин-Голта тата кунта. Кам юрататъ, вăл çынсемпе те ырăрах пулĕ. Тавах сана, тăванăм! Çын ватăлса пырать, тӳпе ĕмĕрĕпех çамрăк, санăн куçусем пекех. Вĕсем нихăçан та ватăлмĕç, шупкалмĕç. Вăхăт иртĕ, çынсем суранĕсене сиплĕç, çĕнĕ хуласем тăвĕç, çĕнĕ садсем чĕртĕç. Урăх пурнăç пуçланĕ, урăх юрăсем юрлĕç. Çапах та пирĕн çинчен, виçĕ танкист çинчен хывнă юрра нихăçан та ан манăр. Санăн илемлĕ ачасем ӳсĕç, эсĕ тата та юратăн. Сирĕнтен сана юратса кайнăшăн телейлĕ эпĕ. Санăн Иван Колосов. 1941 çулхи юпа уйăхĕн 25-мĕшĕ».

● Америкăра кушаксен тĕлĕнмелле йăхне курма пулать. Джонни тата Бритни Гобблсем ăна «ликой» /грек сăмахĕнчен – «кашкăр»/ теççĕ. Вĕсен çине пĕрре пăхсанах çакна ăнланса илетĕн: американсем хăрушă фильмсене ытлашшипех килĕштереççĕ. Çĕнĕ йăха тӳрех кушак-ылмашмăшсем тесе чĕнме пуçланă. Вĕсен усалăнни пек пысăк, сарă тĕслĕ куççем, сăмси, хăлхисемпе куçĕсем тавра çăм çук, ӳчĕ çинче вăл чăмаккан-чăмаккан ӳсет. Килте усракан кĕске çăмлă кушак генетика тĕлĕшĕнчен улшăннипе çакнашкал хăрушă ликой пулса тăнă.

Çапах та ку йăх усал мар, çак кушаксем хуçисемпе те килĕштереççĕ. Арăмĕпе упăшки Гобблсем çирĕплетнĕ тăрăх – ликойсем сунарçăсем пекех. Палламан-пĕлмен çынсемпе хăйсене асăрханулла тыткалаççĕ, çапах та хăвăртах хăнăхаççĕ, ачаш та çепĕç чĕр чунсем пулса тăраççĕ.

Ликойсен çурисене хавассах туянаççĕ, çавна май Гобблсен çемйине ку ыйтупа часчасах шăнкăравлаççĕ. Кушак ĕрчетекенсем «производствăна» 2016 çул тĕлне йĕркелесе ярасшăн.

# Тӳрепе каланă тӳрĕ сăмах

Хуравне илеймессе пĕлсен те
Ыйтăвне лартатăп эп тӳртен:
«Ма пуплес килмест манпа пĕрре те
Чăвашла Шупашкарти тӳрен?»
Манпа çеç хăйне çапла тытас тăк
Каçарма та пулĕччĕ ăна.
Вăл туслашнă-иç, мĕнле калас та,
Далĕн сăмахсарĕпе кăна.
Хушăран тăван ялне кайсан та –
Хыптарать пуль амăшĕн ăшне:
Ара, леш ăçтан тăрук ăнлантăр
«Вырăса» тухайнă ывăлне...
Эп чĕрре кĕретĕп куншăн çеç-и?
Тĕп сăлтавăм – пач урăххинче:
«Ма «Хыпар» хаçат – чун кучченеçĕ –
Курăнмасть мăн пуçлăх аллинче?
Вуламасть ăна вăл. Тĕп хулашăн
Нацин тĕп хаçачĕ ют темме.
Çавăншăн эп пикенсех ятласшăн
Шухăшсăр чиновник-этеме.
Шупашкар чăвашĕ, эсĕ маншăн –
Ĕнерхи сухаç. Апла пулсан
«Хыпара» хальччен илсе тăманшăн
Хăвăн айăпна туллин туйсам!
Айăпу, чăнах та, пысăк санăн,
Вирхĕнен кунсен çаврăмĕнче:
Тăван халăхна сума суманшăн
Çылăхлă эс турă умĕнче!
Ăш-чикре капланнă чăрсăр çиллĕм,
Кур, тухса та выртрĕ çиеле:
Николай Никольскин ырă пилĕ
Мĕншĕн вĕçмелле-ха çилпеле?
Купăрля хăпартнă çутă çăлтăр
Шевлисем паян та тап-таса.
Саншăн та вăл кĕтрет евĕр пултăр,
Тăр унран чунун хĕмне çутса!
Эп курасшăн шĕкĕр хулара та
Чăн чăвашлăха çул панине,
«Вăт хаçат!» – тесе ман «Хыпара» та
Кăмăлтан савса вуланине.

■ **Г.КУЗНЕЦОВ**


РЕКЛАМА ПĔЛТЕРӲ
Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пӳлĕм
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

Администрация Чиршкасинского сельского поселения Чебоксарского района Чувашской Республики в соответствии с п.1 ст.8 Закона Чувашской Республики от 01.06.2004г. № 11 "Об обороте земель сельскохозяйственного назначения в Чувашской Республике" извещает о намерении предоставить в аренду сроком на 10 лет земельный участок площадью 62,35 га с кадастровым номером 21:21:301602:311 для сельскохозяйственного производства. Местонахождение земельного участка: Чувашская Республика, Чебоксарский район, Чиршкасинское сельское поселение (земли сельскохозяйственного назначения). Заявления и письменные возражения принимаются администрацией Чиршкасинского сельского поселения Чебоксарского района с 27.06.2014г. по 28.07.2014г. по адресу: 429521, Чувашская Республика, Чебоксарский район, д.Чиршкасы, пер. Школьный, д.7. Телефон для справок (8-83540) 2-62-35.

Администрация Буртасинского сельского поселения Вурнарского района планирует предоставить в аренду земельный участок сельскохозяйственного назначения сроком на 49 лет:
для ведения сельскохозяйственного производства:
– с кадастровым № 21:09:290201:232 площадью 1175000 кв. м., адрес: Чувашская Республика-Чувашия, р-н Вурнарский, с/пос. Буртасинское.

ПРОДАЮ
**7.СРУБЫ для бани.** Т. 37-28-74.
**66.Заборы кованые.** Т. 89276689587.
**369.Гравмассу, песок** речной, карьерн., щебень. Т. 89520269954.



чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, "ХЫПАР" ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ
Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ
"Хыпар" индексĕ – 54800, "Хыпар"-шăмат кун" – 78353, "Çамрăксен хаçачĕ" – 54804, "Чăваш хĕрарăмĕ" – 11515, "Сывлăх" – 11524, "Кил-çурт, хушма хуçалăх" – 54806.

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Номер редакторĕ Г.А.МАКСИМОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор – тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор Н.Г.СМИРНОВА

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, "ХЫПАР".
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пунктĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
hypar2008@rambler.ru
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.

Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта: hypar@mail.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.
Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн "Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă" рубрикăсемпе пичетленеççĕ.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 7481. Заказ 2310.